ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула
комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Октябрь
25
ВЫРСАРНИКУН
№ 209 (9118)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ (1 стр.).
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсем (1 стр.).
РЕСПУБЛИКĂРИ ХУЛАСЕМПЕ РАЙОН ЦЕНТРĔСЕНЧЕ. Ишлей (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: КПСС райкомĕсен пленумĕсем (2 стр.).
ВЛКСМ Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕ (2 стр.).
Аркадий Эсхель. — Вĕренмеллех пулать. Калав (2—3 стр.).
П. Рунгш.—Çул-йĕр строительстви планне хăвăртрах тултарса çитерер (2 стр.).
МАЛТА ПЫРАКАНСЕН ОПЫЧĔ. В. Таращанец.—Пуянлăх çăлкуçĕсем (3 стр.).
Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ. «Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн ĕçĕсем çинчен тунă отчет тĕлĕшпе тата пурнăç шайне лайăхлатассишĕн, миршĕн пыракан кĕрешÿре ĕççыннисен пĕрлĕхлĕ ĕçне тĕреклетес енĕпе профсоюзсем умĕнче тăракан малашнехи задачăсем çинчен» йышăннă резолюци. Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕн манифесчĕ (3—4 стр.).

Советла суту-илĕве çĕнĕ, çÿлĕрех сыпăка çĕклер

Коммунистсен партийĕпе совет правительстви халăхăн пĕрмаях ÿссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене ытларах тивĕçтерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Ĕççыннисен пурнăçне малалла лайăхлатса пыма партипе правительство халăха куллен кирлĕ япаласем туса кăларассине хăвăрт ÿстерсе пыраççĕ, ик-виç çул хушшинчех халăха апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем парса тăрассине нумай ÿстерме мерăсем йышăнаççĕ.

Халăха куллен кирлĕ таварсене халăх валли нумай парса тăрас тата совет çыннисен пурнăçне малалла лайăхлатса пырас задачăна халех пурнăçлас ĕçре тавар çаврăнăшне мĕнпур майсемпе ÿстерсе пыни тата государство, кооперации суту-илĕвне, колхозла суту-илĕве лайăхлатни уйрăмах пысăк вырăн йышăнать.

Социализм вăхăтĕнче суту-илÿ потреблени япалисене социализмла общество членĕсем хушшинче валеçсе тăмалли тĕп форма пулса тăрать тата нумай вăхăт хушши çавăн пек пулĕ, ĕççыннисем хăйсене кирлĕ япаласене суту-илÿ урлă илсе тăраççĕ.

Партипе правительство советла суту-илĕве сарса пырассине питĕ пысăк вырăна хураççĕ. Çавăнпа СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Советла суту-илĕве малалла аталантарса пымалли мерăсем çинчен» ятарласа постановлени йышăнчĕç.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ çакна палăртрĕç: пирĕн çĕршывра тавар çаврăнăшĕ пĕрмаях ÿссе пырать, анчах чылай таварсем халăх валли çителĕклĕ мар-ха. Суту-илĕве организацилес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. СССР Министрĕсен Совечĕпе партин Центральнăй Комитечĕ советла [illegible]е хăвăрт вăйлатса ярас тĕллев[illegible]новлени йышăнă.

[illegible]ыхи вăхăтри задача çакăн пек,— [illegible] калăнă СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановленире,—советла суту-илĕве хăвăртрах малалла аталантармалла, çапла вара çывăхри ик-виçĕ çул хушшинче халăха кирлĕ [illegible]варсене кашни хулара тата ялă вырăнти кашни районта пĕр чăрмавсăр сутса тăмалла туса çитермелле, тавар илекенсемшĕн лайăхрах тăрăшмалла тата тавар илекенсен ÿссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтермелле, техникăпа лайăх пуянлатнă кучухлехи суту-илÿ предприятисем нумай уçмалла тата куллен кирлĕ япаласен ÿссе пыракан хисепне—промышленноçа ялхуçалăхĕ туса кăларакан япаласене тавар илекенсем патне хăвăрт çитерессине организацилемелле».

СССР Министрĕсен Совечĕпе партин Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановленире тавар çаврăнăшне малалла ÿстерсе пыма çĕнĕ заданисем кăтартса панă, суту-илĕве лайăхрах организацилемелли мерăсене палăртнă. Суту-илÿ предприятийĕсен хисепне ÿстерессине, суту-илÿ работникĕсен кадрĕсене хатĕрлессине, ялти суту-илĕве тата колхозла суту-илĕве лайăхлатассине пысăк вырăна хунă. Государство, кооперации суту-илĕвне тата колхозла суту-илĕве аталантарса пырассишĕн кĕрешме конкретлă программа кăтартса панă. Советла суту-илĕве малалла аталантарса пымалли çак программăна пирĕн çĕршыври ĕççыннисем партипе правительство халăх ырлăхĕшĕн тăрăшнине уççăн кăтартса паракан документ тесе йышăнаççĕ.

Пурте пĕлеççĕ, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тăрăх 1955 çул тĕлне государствăпа кооперации суту-илĕвĕнче ваккăн сутакан таварсен çаврăнăшне, 1950 çулхипе танлаштарсан, 70 процента яхăн ÿстерме палăртса хунăччĕ. Пирĕн çав задание чылай маларах пурнăçлама майсем пур. СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановленире 1954 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, государство тата кооперации суту-илĕвĕнче ваккăн сутакан таварсен çаврăнăшне 72 процент (танлаштармалли хаксемпе) ÿстерме йышăннă: ку вăл пилĕк çуллăх план тăрăх панă задание 1954 çултах ирттерсе тултармаллине пĕлтерет. 1955 çулта вара ваккăн сутакан таварсен çаврăнăшĕ, 1950 çулхипе танлаштарсан, икĕ хута яхăн ÿсмелле.

1954 тата 1955 çулсенче халăха апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем сутасси чылай ÿсет. Пилĕк çуллăх план тăрăх панă заданисемпе танлаштарсан, рынокра сутмалли таварсен фончĕсем нумай ÿсеççĕ. Пилĕк çуллăх план тăрăх 1955 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, халăха аш-какай продукчĕсем сутассине 90 процент ÿстерме палăртса хунă пулсан, халĕ çĕнĕ задани панă—1955 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, аш-какай продукчĕсем 2,3 хут ытларах сутмалла. Пилĕк çуллăх план тăрăх тумтирсем сутассине 80 процент ÿстерме палăртса хунă пулсан, халĕ çĕнĕ задани панă—тумтирсем сутассине 2,4 хут ÿстермелле.

Халăха апат-çимĕçпе промышленность тĕп таварĕсем сутасси хăвăрт ÿссе пынине çак тĕслĕхрен курăнать: 1956 çул тĕлне, 1950 çулхипе танлаштарсан, çав таварсен рыноксенче сутмалли фондне çавăн чухле яхăн ÿстермелле тунă: аш-какай продукчĕсем 2,6 хут, пулă продукчĕсем 2,3 хут, выльăх-чĕрлĕх çăвĕ 2,1 хут, ÿсентăран çăвĕ 2,8 хут, сахăр 2,4 хут, пир-авăр 2 хут, атă-пушмак 2 хут, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем 5,9 хут, велосипедсем 6 хут, радиоприемниксемпе телевизорсем 5,3 хут, сĕтел-пукан 4,8 хут.

Колхозниксем, ялти интеллигенци, совхозсемпе МТС-сенчи рабочисем куллен кирлĕ таварсем ыйтнине, колхозсем производствăра усă курмалли таварсем ыйтнине туллинрех тивĕçтерес тесе, СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ ялта суту-илĕве лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк задачăсем кăларса тăратнă. Центросоюзăн ялти халăха, çавăн пекех колхозсене кирлĕ таварсене сутассине анлăн сарса ямалла, суту-илÿре таварсем çитменни пулмалла мар, ваккăн суту-илÿ тăвакан предприятисене таварсем вăхăтра кÿрсе пымалла. Ялсенче строительство материалĕсемпе тата производствăра кирлĕ таварсемпе суту-илÿ тăвассине анлăн сарса яма палăртнă. Магазинсемпе лавккасем çук пысăк мар ялсемпе поселоксенчи халăха таварсем сутма таварсем сутса çÿрессине, расписани тăрăх пырса таварсем сутассине организацилемелле: 1954—1956 çулсенче ваккăн суту-илÿ тăвакан предприятисем 23 пин уçмалла.

Колхозла суту-илĕве лайăхлатма нумай ĕçсем тумалла. 1954—1956 çулсенче çĕнĕрен 508 колхоз пасарĕ тума палăртнă. Çав вăхăтрах халĕ ĕçлекен пасарсенче складсем, холодильниксем, чайнăйсем, аш-какайпа сĕт-çу тĕрĕслекен станцисем нумай тумалла.

Суту-илÿри мĕнпур работниксен хăйсен ĕçĕнчи культурăна ÿстермелле, суту-илĕве организацилес ĕçри çитменлĕхсене хирĕç вăйлăрах кĕрешмелле, çапла вара тавар çаврăнăшне малалла ÿстерме, суту-илÿ предприятийĕсен хисепне ÿстерме тата халăхшăн ытларах тăрăшса ĕçлеме кăтартса панине пурнăçламалла.

Суту-илÿ организацийĕсем куллен кирлĕ таварсен пахалăхĕшĕн те ответлă пулса тăраççĕ. Суту-илÿ работникĕсен промышленноçа лайăх таварсем туса кăларттармалли экономикăлла майсем пур, çав майсемпе пĕтĕмпех усă курас пулать. СССР Суту-илÿ министерствин, халăх валли кирлĕ таварсем туса кăларакан министерствăсемпе пĕрле, халăха мĕнле таварсем кирлине шута илнĕ никĕс çинче, рынок валли туса кăларакан таварсен ассортиментне çĕнĕрен пăхса тухмалла, таварсем туса кăлармалли плана кирлĕ пек улшăнусем кĕртмелле, халăх илмен таварсене тума пăрахтармалла, вĕсем вырăнне лайăхрах таварсем туса кăларма тытăнтармалла.

Государство, кооперации суту-илĕвне тата колхозла суту-илĕве хăвăрт вăйлатса ярасси партин, советсен тата профсоюзсен мĕнпур органĕсен чи пысăк задачисенчен пĕри пулать. Вырăнсенчи совет, парти тата профсоюз организацийĕсен магазинсемпе столовăйсен ĕçне куллен-кун тĕрĕслесе тăрассине пурнăçламалла, советла суту-илÿ принципĕсене пăснисене хирĕç татăклăн кĕрешмелле, магазинсемпе столовăйсен ĕçĕнчи палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме мерăсем вăхăтра йышăнмалла, халăхшăн тăрăшса ĕçлессине пĕрмаях лайăхлатса пымалла.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ вырăнсенчи совет тата парти органĕсене çапла тума хушаççĕ: советла суту-илÿ социализмла экономикăн питĕ кирлĕ участокĕсенчен пĕри пулнине, советла суту-илÿ работникĕсем вара—социализм ĕçченĕсен отрячĕсенчен пĕри, халăхшăн куллен-кун тăрăшса ĕçлес хисеплĕ задачăна пурнăçласа пыракан отрячĕсенчен пĕри пулнине асра тытса, суту-илÿпе суту-илÿ работникĕсем çине йĕрĕнсе пăхни халĕ те палăрнине пĕтерсе хумалла, суту-илÿ работникĕсем тавра вĕсене юлташла пулăшмалли тата тивĕçлипе хисеплемелли лару-тăру туса хумалла.

Советла суту-илÿ работникĕсен тивĕçĕ суту-илÿ организацийĕсемпе предприятийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтересси, советла суту-илĕве çĕнĕ, çÿлĕрех сыпăка çĕклесси пулать.

(«ПРАВДА» хаçатĕн 1953 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕнчи умстатьи).

* * *

ЗАЕМ ВЫЛЯВĔ

Октябрĕн 25-мĕшĕнче Фергана хулинче СССР халăх хуçалăхне [illegible] малалла аталантармалли пиллĕкмĕш государственнăй заемĕн улттăмĕш выляв пулать.

Вылявра 2.502.500 выигрыш, пурĕ 638.495.000 тенкĕлĕх тухать. (ТАСС).

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

СССР Наука академийĕн пĕрлехи пухăвĕ

Октябрĕн 23-мĕшĕнче СССР Наука академийĕн пĕрлехи пухăвĕнче СССР Наука академийĕн действительнăй членĕсене суйланă тата член-корреспонденчĕсене çирĕплетнĕ.

Ирхи ларура, Отделенисем академика суйлама сĕннĕ кандидатсем çинчен сасăлама тытăнас умĕн, СССР Наука академийĕн президенчĕ А. Н. Несмеянов академик Академи Уставĕн тĕп положенийĕсем çинчен аса илтернĕ тата суйлав задачисем çинчен пĕлтернĕ.

Унтан эксперт комиссийĕсен председателĕсем тухса каланă. Çав комиссисем кандидатурăсене малтан Отделенисенче тĕпчесе вĕреннĕ пулнă. Комисси председателĕсем М. А. Лаврентьев, М. М. Дубинин, А. А. Григорьев, А. И. Опарин, С. А. Христианович, В. П. Волгин, Г. Ф. Александров академиксем Академие суйлаван ученăйсем наука тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен каласа панă, вĕсен чи паллă, наукăн тĕрлĕ отраслĕсене пуянлатнă ĕçĕсем çинчен пĕлтернĕ.

Вăрттăн сасăласа, пĕрлехи пуху СССР Наука академине 51 академик суйланă. Ун хыççăн СССР Наука академийĕн 148 член-корреспондентне çирĕплетнĕ, вĕсене малтан Отделенисенче суйланă пулнă.

СССР Наука академийĕн президиумĕ ячĕпе А. Н. Несмеянов академик халĕ Академие суйланă ученăйсене саламланă тата вĕсене наука ĕçĕнче çитĕнÿсем тума ырă суннă. (ТАСС).

Пир-авăр тĕртекенсен ĕçри çитĕнĕвĕсем

КИРОВАБАД (Азербайджан ССР-ĕ), октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Орджоникидзе ячĕпе тăракан пир-авăр комбиначĕн коллективĕ вунă уйăхри программăна срокчен тултарнă. Мастер помощникĕсем Гасановпа Ниязов ертсе пыракан работницăсем халĕ çитес çул шучĕпе пир-авăр тĕртеççĕ.

Уяв умĕнхи ĕç вахтине тăрса Джавадов, Гаджиева, Агабабаян тата ытти ткачсем нормăна 1,5 хут тултараççĕ тата пĕтĕмпех лайăх продукци туса кăлараççĕ.

Октябрь уявĕ тĕлне Кировабадри текстильщиксем планран ирттерсе вуншар пин метр пир-авăр тĕртсе хатĕрлеççĕ.

Рабочисем валли уçнă столовăйсем

СТАЛИНО, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Путилов поселокĕнче ялхуçалăх машиностроени заводĕнче ĕçлекен рабочисем валли столовăй уçăлнă. Хулан çак районĕнчех Каганович ячĕпе тăракан шахтăри горняксем валли ятарласа столовăй суртне туса пĕтернĕ. Суртăн икĕ хутĕнче пысăк зал, буфет, тумтир хывса çакмалли пÿлĕм, цехсем, складсем, компрессорнăй установкăсем валли кирлĕ пÿлĕмсем пур.

Макеевкăри, Горловкăри, Енакиевăри тата облаçри ытти промышленность центрĕсенчи предприятисенче кăçал 50 ытла çĕнĕ столовăйсем ĕçлеме пуçланă.

Халĕ хуласемпе рабочи поселокĕсенче 900 ытла столовăйсемпе ресторансем тата 2 пине яхăн чайнăйсемпе буфетсем, закусочнăйсем ĕçлеççĕ. Столовăйсемпе ресторансем валли çĕнĕ йышши оборудовани ярса панă.

Ялхуçалăх выставкисем

ДОН çинчи РОСТОВ, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Дон тăрăхĕнчи районсенче ялхуçалăх выставкисем пулса иртеççĕ.

Кăçал уй-хирсене шăварни пысăк усă панă. Батайск, Веселый районĕсенче, Аксайская тата Багаевская станицăсенчи выставкăсене МТС-семпе совхозсем шăварнă çĕрсем çинче лартса ÿстернĕ пахча çимĕçсене илсе пынă. Багаевăри вăрлăхлăх тырă ÿстерекен совхоз пысăк лаптăк çинче кашни гектартан 200 пăт тулă пухса кĕртнĕ. Нумай çул хушши ÿсекен курăк вăррин тухăçлăхĕ те пысăк пулнă.

Выставкăсенче çĕнĕ техника пысăк вырăн йышăнать. Унта подборщик-копнительсем, пахча çимĕç калчи лартмалли машинăсем, стогометательсем, тăваткал тĕмĕн акмалли сеялкăсем пур. Шăваракан çĕрсем çинче ĕçлемелли машинăсем—канав чавакан машинăсем, шыв пĕрĕхтерекен хăватлă агрегатсем тата ялхуçалăх техникин ытти çĕнĕ машинисем те выставка курма пыракансене хытă интереслентереççĕ.

Çĕнĕ çĕрсемпе усă кураççĕ

ЧАРДЖОУ, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Облаçри колхозсем, вĕтлĕх вăрманпа хăмăшран тасатса, çĕнĕ çĕрсемпе усă курмалла тăваççĕ. Тасатса хатĕрленĕ çĕрсем çине çуркунне хлопчатник, люцерна, пахча çимĕçсем акаççĕ.

Çĕр мамăкĕ акса тăвакансене машина-трактор станцийĕсем пысăк пулăшу параççĕ. Механизаторсем суха тăваççĕ, уйхире тикĕслеççĕ, çĕре шăварма вăхăтлăх канавсем чаваççĕ, тăпра тăварланса кайнă участоксене тăвартан тасатаççĕ. Фараб районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ 150 гектар çĕре хăмăшпа вĕтлĕх вăрмантан тасатнă.

Çĕнĕ çĕрсем çине акма пуçланипе облаçри колхозсем хлопчатник 9 пин гектар ытларах акмалла тăваççĕ. Çав çĕрсен çуррине ытла тасатса сухаланă.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн
УКАЗĔ

СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин системинче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен Чăваш АССР-ĕнчи ялхуçалăх специалисчĕсемпе ертсе пыракан работниксене орденсемпе медальсем парса наградăласси çинчен

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1949 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх, нумай çул хушши лайăх ĕçленĕшĕн çаксене наградăлас:

ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ

1. Иосиф Алексеевич **Кожанова**—Сĕнтĕр районĕнчи ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕн начальникне.

«ХИСЕП ПАЛЛИ» ОРДЕНПА

1. Александр Леонтьевич **Леонтьева** — зоотехника, Шăхасан районĕ.
2. Алефтина Сергеевна **Михайловăна**—Шупашкар районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз председательне.
3. Иван Степанович **Чернова**—Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин ветеринари пайĕн начальникне.

«ĔÇРИ ХАСТАРЛĂХШĂН» МЕДАЛЬПЕ

1. Мария Тимофеевна **Волковăна**—зоотехника, Сĕнтĕр районĕ.
2. Иван Филиппович **Курбатова** — Комсомольски районĕнчи зоотехникăпа ветеринари пункчĕн заведующине.
3. Алексей Павлович **Лабинова**—Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин ветеринари пайĕн аслă ветеринари врачне.
4. Екатерина Петровна **Петровăна** — Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствинче ăратлă выльăхсем ĕрчетес енĕпе ĕçлекен инспектора.
5. Варвара Васильевна **Покаместовăна**—зоотехника, Çĕмĕрле районĕ.
6. Михаил Тихонович **Сорокина**—ветеринари врачне, Шупашкар районĕ.
7. Федор Яковлевич **Яковлева**—Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствинче ăратлă выльăхсем ĕрчетес енĕпе ĕçлекен аслă инспектора.

«ĔÇРЕ ПАЛĂРНĂШĂН» МЕДАЛЬПЕ

1. Анна Ивановна **Самсоновăна**—зоотехника, Комсомольски районĕ.
2. Иван Федорович **Стасенкăна**—Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин лашасем ĕрчетес енĕпе ĕçлекен Управленин главнăй зоотехникне.
3. Елена Степановна **Степановăна** — зоотехника, Калинино районĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль. 1953 çулхи июлĕн 22-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн
УКАЗĔ

П. Г. ГАВРИКОВ ЮЛТАША ЧĂВАШ АССР СУТУ-ИЛÿ МИНИСТРĔ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН

Петр Григорьевич Гавриков юлташа Чăваш АССР Суту-илÿ министрĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕшĕн Д. МИТЬКОВ.

Шупашкар хули, 1953 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн
УКАЗĔ

А. Н. ТОГАЕВА ЧĂВАШ АССР ИСКУССТВИСЕН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ДЕЯТЕЛĔН ХИСЕПЛĔ ЯТНЕ ПАРАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш музыка искусствине аталантарас енĕпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн тата музыкăна вĕрентекен, хор дирижерĕ пулса ĕçлеме пуçланăранпа 50 çул тултарнă май Чăваш АССР-ĕнчи Сĕнтĕрвăри хулинчи ачасен çуртĕн хорĕн руководительне Анатолий Николаевич **Тогаева** Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн хисеплĕ ятне парас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕшĕн Д. МИТЬКОВ.

Шупашкар хули, 1953 çулхи октябрĕн 24-мĕшĕ.

* * *

ПЫСĂК ÇĔКЛЕНÿПЕ

ИШЛЕЙ. Районти ĕççыннисем СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Советла суту-илĕве малалла аталантарса пымалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление пысăк хавасланăхпа кĕтсе илчĕç. Халĕ суту-илÿ работникĕсем çак постановление сÿтсе яваççĕ, ĕççыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе конкретлă ĕçсем туса иртерме палăртаççĕ. Ишек ялпоĕнче ĕçлекенсем, çак постановленипе хавхаланса, тăваттăмĕш кварталти тавар çаврăнăш планне Октябрьти Аслă революци 36 çул тултарнă тĕле пурнăçлама пулчĕç. Ялпо çак уйăхри плана октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарнă, 9 уйăхри плана 122 процент пурнăçланă.

Ф. МАЛЫШКИН.

Республикăри хуласемпе район центрĕсенче

И Ш Л Е Й

Поезд Шупашкартан тухнăранпа темиçе минут кăна иртрĕ. Проводник Ишлей разъездне çитни çинчен пĕлтерчĕ. Вуншар çын анса юлчĕç.

— Ирхи поездпа кайрăмăр, каçхипе килтĕмĕр, ĕç те турăмăр,—терĕ пĕри.

— Поездпа килмесен автомашинăпа килме пулать. Халĕ ĕлĕкхи мар,—тет ватă колхозник. Çула май вăл ĕлĕк Ишлей çыннисем, Шупашкар юнашар пулин те, кĕркунне е çуркунне вăрман витĕр çÿреме питĕ асаплă пулни çинчен каласа парать.

Хĕн-хурлă та асаплă пулнă Ишлей ялĕнчи çынсен пурнăçĕ Октябрьти Социализмла Аслă революциччен. Сăртлă та тăмлă вырăнта тырпул начар пулнă. Уйра çăвĕпе тар юхтарса ĕçленипе туса илнĕ тырпул çур хĕле те çитмен. Çынсен вара ирĕксĕрех ялти пуянсем патĕнче е хулана кайса хуçасем патĕнче тара кĕрĕпсе ĕçлеме тивнĕ.

Паянхи Ишлей пачах урăхла.

1935 çултанпа Ишлей—район центрĕ. Çакăн хыççăн вăл уйрăмах хăвăрт ÿсме пуçларĕ. Кунта промысла артелĕсемпе промышленность предприятийĕсем ĕçлеме пуçланă.

Район центрĕнче промкомбинат, сĕт-çу завочĕ, «XX лет Октября» çĕнĕ çĕлекен артель пур. Сĕт-çу завочĕ кăçалхи иккĕмĕш кварталта СССР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерствипе профсоюз Центральнăй комитечĕн виççĕмĕш премине илме тивĕçлĕ пулчĕ. «XX лет Октября» артель коллективĕ производство планне кашни уйăхрах ирттерсе тултарать.

Ишлейрен çур сухрăмра Шупашкарпа Вăрнара çыхăнтаракан шоссе çулĕ иртсе каять. Ку çул тăрăх куллен нумай автомашинăсем çÿреççĕ. Çак кунсенче Шупашкарпа Ишлей хушшинче автобус çÿреме тытăнчĕ.

Халĕ Ишлейре ултă магазин, икĕ чайнăй, лавккасем тата ытти суту-илÿ организацийĕсем пур. Хуçалăхра куллен кирлĕ пулакан япаласем сутмалли çĕнĕ магазин уçнă. Районти культура таварĕсем сутакан магазин урлă кăçал ĕççыннисене мотоциклетсем, велосипедсем, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем нумай сутнă.

Район центрĕнчи вăтам шкулта 500 ача ытла вĕренет. Кăçал X-мĕш класран 54 çын вĕренсе тухнă. Вĕсенчен нумайăшĕ аслă шкулсене вĕренме кĕнĕ. Вăтам шкулта 31 учитель ĕçлет.

Ишлейри МТС çултан-çул çĕнĕ техникăпа пуянланса пырать. Кăçал кăна дизельнăй вунă трактор, ултă самоходнăй комбайн, вунă сеялка, сакăр плуг тата ытти машинăсем нумай кÿрсе килнĕ. Механизаторсем ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăрт туса пĕтерес тĕлĕшпе илнĕ хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

МТС-ра строительство ĕçĕсем те анлăн сарăлса пыраççĕ. Кăçал кунта электростанци тума тытăннă.

Çавăн пекех район центрĕнче çĕнĕ пекарня тăваççĕ. Ишлей çыннисен килĕсене халĕ Ильич лампочкисем çутатаççĕ, кашни килтех радио каласать.

Служащисемпе рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсем лайăхлансах пыраççĕ. Кăçал рабочисемпе служащисем валли пурăнмалли икĕ çĕнĕ çурт, водопровод, çĕнĕ чайнăй тăваççĕ.

Район центрĕнчи больницăра рентген тата ытти тĕрлĕ кабинетсем ĕçлеççĕ. Стационарта койкăсен хисепĕ çултан-çул нумайланса пырать.

Ялти «Знамя коммунизма» колхоз организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклене. Колхозăн электростанци пур. Кунта ялхуçалăх ĕçĕсене чылайăшне механизациленĕ. Колхозра электричество вăйĕпе çăм тапакан машина ĕçлет. Çак кунсенче колхоз хăма çурмалли рама туса пĕтерчĕ.

Ишлей, республикăри ытти район центрĕсем пекех, экономика тĕлĕшĕнчен хăвăрт аталанать. Кунта çĕнĕ предприятисем, культурăпа сут-ĕç учрежденийĕсем нумайланса пыраççĕ.

Телейлĕ те савăнăçлă пурнăçĕ Ишлейри ĕççыннисен. Вĕсем хуçалăхпа культура строительстви енĕпе хăйсем умĕнче тăракан задачăсене чыслăн пурнăçлассишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ.

В. ДМИТРИЕВ,
КПСС Ишлей райкомĕн секретарĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: учрежденисен çурчĕ (сулахай енче); районти больница (сылтăм енче).

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

КПСС райкомĕсен пленумĕсем

Канаш районĕ

КПСС Канаш райкомĕн пленумĕ КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе районти парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем çинчен райком секретарĕ Н. Чернов юлташ тунă доклада сÿтсе яврĕ.

Докладчик тата тухса калаçнă юлташсем ĕçсыннисем КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановленине пысăк хавасланăхпа кĕтсе илнине тата вăл социализмла ялхуçалăхне тĕпренех лайăхлатма пулăшнине палăртрĕç, партипе правительство лартнă задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе туса ирттермелли практикăлла ĕçсем çинчен каларĕç.

Юлашки çулсенче районти колхозсем тырпул тухăçлăхне чылай ÿстернĕ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕ те, вăрçă хыççăнхи çулпа танлаштарсан, икĕ хут ытларах нумайланнă. Апла пулсан та район тырпул тухăçлăхне ÿстермелли тата выльăх ĕрчетмелли плана çултан çул тултараймасть. Ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ. Колхозсем илекен тата колхозниксене ĕçкунĕшĕн валеçсе паракан тупăш пысăк мар.

Выльăх ĕрчетесси уйрăммăнах çителĕксĕр пырать. Район кăçал та выльăх ĕрчетмелли плана тултарайман. Выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш чакнă. Колхозсем выльăхсене тăрантарма кирлĕ таран апат хатĕрлемен. Молотов ячĕпе тăракан т. ыт. хăшпĕр колхозсенче улăма тирпейсĕр салатса пĕтернĕ. пур пек апата фермăсене актпа уйăрса паман. Выльăхсем валли витесем лартас тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Пĕр колхозра та фермăри йывăр ĕçсене механизацилемен. Строительство бригадисем вăхăтран вăхăта кăна ĕçлеççĕ.

«Комбайн» колхоз председателĕ Степанов, «Красный Октябрь» колхоз председателĕ Шишкин, Маленков ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Мухин юлташсем ĕçе механизацилеме, улăх-çарансене аванлатма МТС сахал пулăшни, тымарçимĕçсемпе çĕрулми тухăçлăхне ÿстерме май паракан агротехникăлла меслетсемпе практикăра усă курманни çинчен чарăнса тăчĕç.

Обществăлла выльăхсен шучĕ нумайлансах пырать. Анчах та хăшпĕр колхозсем вĕсене пăхма кирлĕ таран кадрсем уйăрман. Пур пеккисем те, вĕсемпе çителĕксĕр ĕçлени пирки, тăтăшах улшăнаççĕ. Нумай колхозсем выльăхсен йышĕпе тупăшне ÿстерекенсене хушса тÿлемелли йĕркене пурнăçламаççĕ. Колхозсенчи парторганизацисем фермăра ĕçлекенсем хушшинче политикăлла ĕç тăвассине начар лартнă, социализмла ăмăртăва сарса пыман.

Маленков ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хăйсем фермăра ĕçлеме тытăннă май, ытти артельсенчи çамрăксене те фермăсене кайса обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ÿстерессишĕн активлăн кĕрешме чĕнчĕç. Анчах парти организацийĕсем комсомолецсен пуçарăвне сарма пулăшмаççĕ, коммунистсемпе комсомолецсене фермăсене ĕçлеме яма тăрăшмаççĕ.

Пленумра уйрăммăнах МТС çитменлĕхĕсене хытă критиклерĕç. МТС техникăпа çителĕксĕр усă курать, колхозсемпе тунă договора вăхăтра пурнăçламасăр агротехникăна пăсать. Авăн çапмалли нумай пулсан та, молотилкăсем ахалех лараççĕ. Тракторсемпе ытти машинăсене юсамалли сезона çителĕксĕр хатĕрленеççĕ. МТС руководителĕсем механизаторсен кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Колхозсем тракторист пулма е ытти машинăпа ĕçлеме вĕренме яма уйăрнă çынсене ытти вырăна салатса яраççĕ.

Парти райкомĕн пленумĕ хăйĕн решенийĕнче КПСС райкомĕн бюроне, партипе комсомолăн пуçламăш организацийĕсене партипе правительство ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе палăртнă ĕçсене пурнăçлассишĕн хастарлăн кĕрешме хушрĕ.

П. ЩИПЦОВ.

Çĕрпÿ

КПСС Çĕрпÿ райкомĕн пленумĕ çакна палăртрĕ: партипе правительство куллен пулăшса пынипе районти колхозсем организаципе хуçалăх енчен тĕрекленсе пыраççĕ Обществăлла хуçалăх ÿснипе пĕрлех. колхозниксен тупăшĕ нумайланса пырать, тырпул тухăçлăхĕпе обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕ, çавăн пекех колхозсенчи пайланман фонд ÿссе пырать.

Докладчик парти райкомĕн секретарĕ Кирпичев юлташ тата тухса калаçансем районти колхозсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине те палăртрĕç. КПСС райкомĕн бюровĕпе райсовет исполкомĕ колхозсене, МТС-а çителĕксĕр ертсе пыраççĕ, уйрăмах юлса пыракан колхозсене тивĕçлĕ пулăшу памаççĕ.

Тырпул туса илесси районĕпе илсен çителĕксĕр пулса пырать. Иртнĕ çулта кашни гектартан 6,8-шар центнер çеç тĕштырă туса илнĕ. Тĕп çитменлĕх—агротехникăлла ĕçсене тĕрĕс пурнăçласа пыманнинче. МТС колхозсемпе тунă договора пурнăçласа пымасть.

Пленумра пулнисем уйрăмах обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе колхозсем çителĕксĕр ĕçлесе пынине палăртрĕç. Район çулсерен выльăхсем ĕрчетмелли плана тултарса пыраймасть, вĕсенчен илекен тупăш та сахал. Кăçал 9 уйăх хушшинче кашни ĕнерен 800 килограмм сĕт суса илнĕ пулсан, «Память Ленина», «Авангард», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче 337—885 килограмм çеç сĕт суса илнĕ. Парти райкомĕпе райсовет исполкомĕ фермăсенчи кадрсемпе япăх ĕçлеççĕ, вĕсене кирлĕ пулăшу памаççĕ.

Пленумра тухса калаçансем парти райкомĕпе райсовет исполкомĕ колхозсенчи ертсе пыракан кадрсемпе, специалистсемпе çителĕксĕр ĕçленине тĕрĕс палăртрĕç. Ăна çак факт та уççăн çирĕплетсе парать: кăçал колхоз председателĕсенчен 48 процентне улăштарнă.

Пленум чылай колхозсемпе МТС-ра массăлла-политикăлла ĕç çителĕксĕр пулса пынине тата агитацилле ĕçе хуçалăх ыйтăвĕсемпе çыхăнтарса туса пыманнине палăртрĕ. Районта халĕ те ялхуçалăхĕнчи хăшпĕр ĕçсем юлса пыраççĕ Уйрăмах авăн çапас, государствăна çĕрулми, пахча çимĕç, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парасси, обществăлла выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленесси начар тăрать.

Пленумра КПСС обкомĕн секретарĕ Т. А. Ахазов юлташ пулчĕ, вăл районти парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем çинчен каласа пачĕ.

Пленум КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене ырларĕ тата вĕсене пурнăçлама тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Х. ИВАНОВ.

ВЛКСМ Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕ

ВЛКСМ Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн итогĕсем тата комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен парти обкомĕн секретарĕ Н. А. Шмаков юлташ доклад турĕ.

Докладчик КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьте пулса иртнĕ Пленумĕн ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Комсомол организацийĕсем колхозсемпе МТС-сен тата совхозсен ĕçĕсенче мĕнле хутшăнса пыни çинчен каланă май, Шмаков юлташ республикăри комсомол организацийĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ. ВЛКСМ обкомĕпе райкомĕсем тата пуçламăш организацисем çамрăксене колхозсемпе МТС-сен тата совхозсен ĕçне хутшăнтарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, колхозсемпе совхозсенчи çитменлĕхсене хирĕç кирлĕ пек кĕрешмеççĕ.

Ялсенчи комсомол организацийĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сахал хутшăнаççĕ. КПСС Чăваш обкомĕн VII-мĕш пленумĕ йышăннă тăрăх, комсомол обкомĕпе райкомĕсен 1953 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕччен выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлеме 1.500 комсомолеца ямалла. Выльăхсем валли çителĕклĕ апат, витесем хатĕрлес ĕçсене комсомолецсемпе çамрăксене активлă хутшăнтармалла.

Колхозсемпе МТС-сенчи комсомол организацийĕсен пĕрчĕллĕ тата техникăлла культурăсен, çĕрулмипе пахча çимĕçсен тухăçлăхне ÿстерессишĕн ытларах кĕрешмелле, уй-хир ĕçĕсене вăхăтра тата лайăх пахалăхпа туса ирттерессишĕн, хура çĕртмене вăхăтра туса хăварассишĕн, тырпулсене кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртмелле тăвассишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

Докладра çавăн пекех çамрăксен социализмла ăмăртăвне вăйлатас, малта пыракан опытпа наука çитĕнĕвĕсене пропагандăлас, ялсенчи тата предприятисенчи комсомол организацийĕсене колхозсене электрификацилес, парниксемпе теплицăсем тăвас ĕçе хутшăнтарас, МТС-сене инженерсемпе техниксем парса пулăшас ыйтусем пысăк вырăн йышăнчĕç.

«ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантарасси çинчен» КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановление республикăри комсомолецсемпе çамрăксем питĕ пысăк хавасланăхпа кĕтсе илчĕç. Парти организацийĕсем ертсе пынипе комсомол организацийĕсем ялхуçалăхне малалла аталантарасси çинчен партипе правительство йышăннă историлле решенисене пурнăçа кĕртессишĕн хастарлă кĕрешеççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксем ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне хăпартас, обществăлла выльăх-чĕрлĕхпе унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе пысăк обязательствăсем илеççĕ.

ВЛКСМ Ишлей райкомĕн секретарĕ **Михайлов** юлташ районти комсомолецсемпе çамрăксен хастарлăхĕ ÿсни çинчен каласа пачĕ. Комсомолецсемпе çамрăксенчен 50 çын ытла ялхуçалăх механизаци шкулне вĕренме илме ыйтса заявлени панă. Михайлов юлташ ВЛКСМ обкомĕ ялсенчи комсомол организацийĕсене çителĕксĕр ертсе пынине палăртрĕ. Обком работникĕсем комсомол организацийĕсем колхоз производствинче мĕнле ĕçленипе сахал интересленеççĕ. «Çамрăк коммунист» хаçат ялхуçалăхĕнчи малта пыракан опыта пропагандăлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет.

Комсомолăн Чкаловски райкомĕн секретарĕ **Шакуров** юлташ Сталин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем фермăсем патне выльăх апачĕ турттарас тата выльăх-чĕрлĕх витисене юсас тĕлĕшпе хастарлă ĕçлени çинчен каласа пачĕ. Çамрăксем хушшинче социализмла ăмăртăва йĕркелес ĕçри çитменлĕхсене кăтартса пачĕ.

ВЛКСМ Комсомольски райкомĕн секретарĕ **Максимова** юлташ ялхуçалăх механизаци шкулĕсенчен тата республикăри вăтам ялхуçалăх шкулĕнчен вĕренсе тухнă специалистсемпе ĕçре лайăхрах усă курма кирли çинчен каларĕ.

Ишлей районĕнчи «Мичуринец» колхозри комсомолец Липов юлташ КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановленине хавхаланса, колхозри ялхуçалăх ĕçченĕсем хастарлă ĕçлени çинчен каласа пачĕ. Колхоз государствăна тырă памалли, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плансене чылай малтан тултарнă. Выльăх-чĕрлĕхрен колхоз пысăк тупăш илет. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе çамрăк дояркăсем Сорокина, Липова тата ытти юлташсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Комсомолец Алешин ертсе пыракан сысна ĕрчетекенсен бригади пысăк ĕç тăвать. Колхоз садран 67.000 тенкĕ тупăш илнĕ.

— Анчах та,—тет Липов юлташ,—колхоз ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Комсомол организацийĕ правление ытларах пулăшнă пулсан, çитменлĕхсем пулман пулĕччĕç. Колхозри комсомол организацийĕ япăх ĕçлет-ха, ăна ВЛКСМ райкомĕ çителĕклĕ пулăшмасть.

ВЛКСМ Çĕрпÿ райкомĕн секретарĕ **Воротников** юлташ комсомол обкомне ĕçре пуçарулăх кăтартманшăн критиклерĕ. Çĕрпÿри ялхуçалăх техникумĕнче вĕренекенсенчен нумайăшĕ—комсомолецсем. Анчах та ВЛКСМ обкомĕ техникум ĕçĕ çине сахал çаврăнса пăхать.

Пăрачкав районĕнчи Суворов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ комсомолец **Жедяев** юлташ комсомол организацийĕсем умне пысăк ыйтусем кăларса тăратрĕ. Ку колхозри комсомол организацийĕ артель умĕнче тăракан задачăсене татса парас ĕçре хăйĕн пуçарулăхне сахал палăртать. Хăшпĕр комсомолецсем ĕçкунĕсен тумалли минимума тултармаççĕ, çамрăксем хушшинче ĕç дисциплини начар. Суворов ячĕпе тăракан колхоз—район центрĕнче, ăна комсомолец ертсе пырать. Анчах ВЛКСМ райкомĕ унти комсомолецсен ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть, обком секретарĕ Иванов юлташ района пырсан, çак колхозри комсомол организацийĕн ĕçĕпе интересленмен.

Елчĕк машина-трактор станцийĕн главнăй агрономĕ **Никишев** юлташ МТС-ри комсомолецсемпе çамрăксем партипе правительство ялхуçалăхне малалла аталантарасси çинчен йышăннă решенисене хĕрÿллĕ ĕçпе кĕтсе илни çинчен калать. Комсомолецсем Никифоровпа Буршев юлташсем ДТ-54 тракторпа ĕçлесе плана 165 процент тултарчĕç. Анчах та ВЛКСМ райкомĕ МТС-ри комсомол организацине çителĕксĕр пулăшать.

ВЛКСМ Куславкка райкомĕн секретарĕ **Николаев** юлташ ВЛКСМ обкомне пуçламăш организаци секретарĕсемпе çителĕксĕр ĕçленĕшĕн критиклерĕ. ВЛКСМ обкомĕ комсомол организацийĕсен паха опытне пĕтĕçтермест.

Пленумра ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ **Иванов**, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозри уй-хир бригадин бригадирĕ **Перепелкин**, Шăхасан районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозри свинарка **Иванова**, ВЛКСМ Шупашкар райкомĕн секретарĕ **Евлампьев**, ВЛКСМ обкомĕн членĕ **Александров** тата ытти юлташсем тухса калаçрĕç.

Пленум сÿтсе явнă ыйту тăрăх тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Çул-йĕр строительстви планне хăвăртрах тултарса çитерер

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви транспорта малалла вăйлатассишĕн куллен тимлĕн тăрăшаççĕ. Транспорта малалла аталантарни Тăван çĕршывăн халăх хуçалăхне вăйлатма кирлĕ паха условисем пулса тăрать. Халăх хуçалăхĕнче автомобиль транспорчĕ те пысăк вырăн йышăнать. Автомобильсен шучĕ çултан-çул ÿснĕ май, вĕсемпе груз турттарасси те ÿссе пырать.

Çакă вăл çул-йĕр строительствине вăйлатма, çулсене çĕнетсе лайăхлатма, вĕсене тĕпрен юсама тата лайăх тытса тăма хушать. Çул-йĕр тума государство çулсерен укçа-тенкĕ нумай уйăрса парать, машинăсемпе çул тăвакан станцисене çĕнĕ техника парать. Çапах та çулсем тăвасси тата вĕсене юсасси—машинăсемпе çул тăвакан станцисен ĕçĕ кăна мар. Ку ĕçе промышленность предприятийĕсен, колхозсен тата ялсенчи пĕтĕм халăхăн активлă хутшăнмалла.

Çулсем лайăх та çирĕп пулни колхозсемшĕн хăйсемшĕнех усăллă. Колхозсенче автомашинăсен шучĕ ÿснĕçемĕн ÿсет. Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ çĕршыври ялхуçалăхне аталантармалли пысăк программа палăртса хучĕ. Çак программăна пурнăçлани çĕршывра ялхуçалăх продукчĕсем нумай туса илме, ялхуçалăхĕн кая юлнă отраслĕсене хăвăрт аталантарма май парать. Ялпа хула хушшинче хуçалăхпа культура çыхăнăвĕсем çулсерен анлăрса пыраççĕ, тавар çаврăнăшĕ ÿсет, ялхуçалăх продукчĕсем турттарасси вăйланать. Автомобиль çулĕсем лайăх та çирĕп пулни—колхозсен хуçалăхне малалла тĕреклетме май паракан условисенчен пĕри.

Пирĕн республикăри ĕçсыннисем çул-йĕр строительствине активлă хутшăнаççĕ. Кăçал республикăри нумай районсем çул-йĕр ĕçĕсен планне ăнăçлă тултарчĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕ республикăра чи малти вырăна тухрĕ. Вăл плана пур кăтартусем тăрăх та ирттерсе тултарнă. Çакна май Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Сĕнтĕрвăрри районĕнчех хăвармалла тунă.

Шупашкар Ишлей, Тăвай, Чкаловски, Шăхасан районĕсем те ăнăçлă ĕçлерĕç. Ку районсенче плана срокчен тултарассишĕн ăмăрту анлăн сарăлнă пулнă. Ăмăрту мĕнле пынине районсенчи хаçатсенче сутатнă, канашлусенче сÿтсе явнă, малта пыракан колхозсене куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавсем панă. Асăннă районсенчи ăнăçлăх строительствăна ĕçсыннисене активлăн хутшăнтарнинчен чылай килнĕ.

Çапах та республикăра кăçал иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, çул-йĕр строительстви çителĕксĕр пулса пырать. Чул сарса çулсем тумалли плана халĕ те тултарайман-ха. Çак плана 241-мĕш çул-йĕр участокĕпе Вăрнар районĕ 50-шар процент кăна тултарнă. Йĕпреç, Шăмăршă, Красноармейски, Сĕнтĕр. Кувакино тата ытти хăшпĕр районсем чăтма çук кая юлчĕç. Вĕсем пĕтĕм республикăна каялла туртса пыраççĕ. Çак районсем çулсене тĕпрен юсамалли тата чул сарса лайăхлатмалли плана тултарас тĕлĕшпе уйрăмах çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Ку плана 50-мĕш МДС 70 процент кăна тултарнă. Çулсене юсас енĕпе 241-мĕш çул-йĕр участокĕ те юлса пынине палăртмалла. Çак участокăн начальникĕ Жарков юлташ коллектива социализмла ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçлама мобилизацилемест. Участок коллективĕ 243-мĕш çул-йĕр участокĕпе ăмăртăва тухнă. 243-мĕш участок ăмăртура илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçларĕ. Условисем пĕр пек пулин те, 241-мĕш участок пур енĕпе те юлса пырать. Кунта социализмла ăмăртура илнĕ обязательствăсене манса кайнă, участок начальникĕ Жарков юлташ государство планне пурнăçлассишĕн ответлăха туймасть.

Кĕперсем тумалли плана 17 район кăна тултарнă.

Чул сарса çулсем тата кĕперсем тумалли плана тултарайманнине райсовет исполкомĕсен çул-йĕр пайĕсен заведующийĕсем, çул-йĕр участокĕсен начальникĕсем строительство материалĕсем çитменнипе ăнлантарса пама пăхаççĕ Ку вăл пачах тĕрĕс мар. Ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ пулсан, чул, йывăç тата строительствăра кирлĕ ытти материалсем çителĕклĕ хатĕрлеме май пулнă.

Красноармейски, Йĕпреç, Кувакино, Калинино районĕсенче ялсем хушшинчи çулсене юсамалли плана ку таранах çитсе те тултарман. Çавăншăн МДС та айăплă, вăл 186 километр тăршшĕ çул юсас вырăнне 160 километр кăна юсанă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çул-йĕр ĕçĕсен планне мĕнле пурнăçлани çинчен сÿтсе яврĕ. Министрсен Совечĕ кăçал республикăра çул-йĕр юсасси çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ, октябрь уйăхĕнче çул-йĕр строительствине ĕçсыннисене хутшăнтармалла тума тата кашни колхоз тăрăх çул-йĕр ĕçĕсен планне ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне тултарса çитерме хушса хăварчĕ.

Çул-йĕр ĕçĕсем ăнăçлă пулса пырасси малтанах тĕплĕн хатĕрленнинчен килет. Çавăнпа та килес çулхи ĕçсене тума халех хатĕрлеме тытăнас пулать. Тăппа шăниччен чул хатĕрлесе хумалла тата ăна хĕллехи вăхăтра турттарса тухмалла. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ 1954 çулхи ĕçсене тума кĕркуннехи вăхăтра чул хатĕрлеме план çирĕплетрĕ.

Комсомольски, Ишлей, Канаш, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче чул хатĕрлеме тытăннă та ĕнтĕ. 243-мĕш çул-йĕр участокĕ хăйăрпа чул килес çулхи ĕçсем валли 20 процент хатĕрлесе турттарса тухнă. Ку ĕçсем малалла пыраççĕ. Ытти районсем, 240-мĕш тата 241-мĕш çул-йĕр участокĕсем чул хатĕрлеме тытăнманпа пĕрех-ха.

Çул-йĕр органĕсен, ял Совечĕсен çул-йĕр строительстви енĕпе туса çитермен ĕçсене халех вĕçлесе çитермелле. 1953 çулхи плана пур енĕпе те тултармалла тата ирттерсе тултармалла килес çул валли чул хатĕрлесе хумалла.

Пирĕн республика çул-йĕр ĕçĕсен планне кашни çулах тултарнă тата ирттерсе тултарнă Кăçал эпир ку енĕпе кая юлтăмăр. Çак çитменлĕхе пĕтермелле кашни район тăрăх плана ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарса çитермелле.

П. РУНГШ,
Чăваш АССР Çул-йĕрпе транспорт хуçалăх управленийĕн начальникĕ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

Çĕмĕрле районĕнчи Мăн Улхаш ялĕнчи клуб заведующийĕ Е. И. Кириллова юлташ йĕркеллĕ ĕçлеменни çинчен пĕлтерекен çырăва Çĕмĕрле райсовет исполкомне тĕрĕслеме янăччĕ.

Çĕмĕрле райсовет исполкомĕ çырура кăтартнă фактсем тĕрĕс пулни çинчен çырса пĕлтерчĕ. Е. И. Кириллова юлташа ĕçе лайăхлатма хушнă. район Совечĕн исполкомĕ унăн ĕçне малашне уйрăммăн асăрхаса тăма йышăннă.

Вĕренмеллех пулать

КАЛАВ

Тин кăна туса пĕтернĕ чул çурт. Тултан пăхма вăл ытлашши капмар та мар. Шалтан вара пĕр-пĕр заводăн чылай пысăк цехĕ пек туйăнать. Унăн кирпĕчпе бетонран хывнă полне тата поххалтан çÿлелле хăпаракан, унтан аялалла кукăрăлса анакан тимĕр трубисене шута илсен, ку вăл хăй те пĕр-пĕр пĕчĕкрех завод вырăнĕнче хисепленме пултарать.

Халлĕхе çуртăн шалти штукатурки те, бетонланă урайĕ те тивĕçе çитмен. Стенисем кăна мар, сывлăшĕ те кунта нÿрĕ.

Ытах, ку çурта эпир цех тейĕпĕр. Çак цехăн варрине çĕнĕ машина вырнаçтарса лартнă,—электромагнит вăйĕпе курăк вăрлăхĕсем тасатмалли машина. Кун пекки МТС-ра халиччен пулман-ха. Тен, çавăнпа-ши ăна улттăмĕш кун ĕнтĕ ниепле те ĕçе яраймаççĕ?!

Машина тавра пилĕк-улттă çын пухăнса тăнă,—монтажниксем. Кунта слесарĕ те, тимĕрçи те, мастерской пуçлăхĕ те пур. Кунтах салху сăн-сăпатлă Нина Павловна Ивгусева та тăрать. Вăл — агроном, курăк вăрлăхĕсемпе йĕтĕн ăсти. Çавăнпа та çĕнĕ машинăна ĕçе яраймании вăл уйрăмах хытă пăшăрханать. Колхозсенче курăк вăрлăхĕсене те, йĕтĕне те тахçанах çапса пуçтарнă,—тасатмалла. Халиччен пек тасатни çителĕксĕр. Шăрчан вăррине, акă, йĕтĕн вăрлăхĕнчен ниçĕнле сортировкăпа та тасатса уйăрма çук. Çавăн пекех клеверпа люцерна е тимофеевка вăрлăхĕсенче те ют вăрăсем нумай пулаççĕ. Çĕнĕ агротехника çĕнĕлле ĕçлеме хушать. Çавăншăн çунать те ĕнтĕ Нина Павловна. Анчах машина йĕри-тавра пуçтарăннă çынсем агронома пĕртте асăрхамаççĕ. Те пур вăл, те çук,—тăнă та тăраççĕ, нимĕн те тумаççĕ. Пуçĕсене сулкалаççĕ,—ах-а!.. тенелеççĕ. Улттăмĕш кун çапла. Эх, ку кăтăклă техникăна агроном хăй пĕлес пулсан!..

Çак вăхăтра тахăшĕ, цехри шăплăха тĕкĕнсе йĕкĕлтекен сасăпа пăсса:

— Авă, «Эпир халех» килет,—терĕ.

Нина Павловна çак сасă еннелле вăрах çаврăнчĕ. Мĕнле «Эпир халех»? Ку сăмаха кантăк умĕнче тăракан çамрăк слесарь Ваня Тарганов персе ячĕ иккен,—пачах та ăнсăртран, кунта Нина Павловна пуррине асăрхамасăр. Халĕ ак унăн куçĕсем агроном куçĕсемпе тĕл пулчĕç те вăл кĕрхи палан пек хĕрелсе кайрĕ, унтан пуçне пĕксе, çынсем хушшинелле кĕрсе тăчĕ.

Нина Павловна çамрăк слесарь сăмахĕ мĕне пĕлтернине чухласах илеймерĕ-ха, çапах та, чунĕ тем сиснипе, чÿречерен урамалла пăхрĕ. Вăл хăйĕн упăшкине курчĕ. Ăна?.. Ăна «Эпир халех» тесе чĕнеççĕ иккен?!. Халĕ ĕнтĕ Нина Павловнăн та пичĕ пĕçерсе кайрĕ. Цехри çынсем пурте ун çине тăрăхласа пăхнăн туйăнчĕ ăна. Вăл, вăтаннипе, çавăнтах çĕр тĕпне путса анма та хатĕр. Ăçта кайса кĕмелле? Намăса ăçта хумалла? Вăл урăх тÿссе тăраймарĕ, çаврăнчĕ те тÿрех тулалла вăркăнчĕ. Тултан кĕрекен упăшки маларах пырса çитнĕ пулсан, Нина Павловна ăна сасартăк уçса янă алăкпа çамкинчен шаплаттаратчĕ. Юрать, лешĕ пĕр-икĕ утăм кайрах çитнĕ.

Арăмĕ çавăн пек вăркăнса тухнинчен тĕлĕннĕ Михаил Петрович Хуралев çăварне кăна карса пăрахрĕ. Пĕр самант нимĕн те чĕнеймерĕ. Арăмĕ чылай малалла кайсан тин Хуралев:

— Нина! Нинук! Тăхта-ха, мĕн пулчĕ? Нина!—тесе кăшкăрчĕ.

Нина Павловна чарăнса тăмарĕ. Хуралев ун хыççăн чупрĕ. Хăй хулăн сассипе çапла кăшкăрать:

— Чим-ха, Нина! Кам кÿрентерчĕ сана? Эпир халех! Халех тăн кĕртĕпĕр!..

Сакна илтсен, вăрлăх тасатмалли цехра тăрса юлнă çынсем ахăлтатса кулса ячĕç. Тахăшĕ, сассине Хуралев пекех хулăнлатса:

— Эпир халех!—терĕ. Кулă çĕнĕрен кĕмсĕртетсе кайрĕ.

... Нина Павловна алăксене шалтлаттарса пырса кĕнине курсан, унăн кукăльăра аппаланакан амăшĕ питех те тĕлĕнчĕ.

— Хĕрĕм, мĕн пулнă?—ыйтрĕ вăл, хирĕç тухса.—Ара, хуллентерех çÿреме юрамасть-им? Ача тин çеç çывăрса кайрĕ.

Хĕрĕ хирĕç чĕнмерĕ, тÿрех малти пÿлĕмелле иртрĕ. Унччен те пулмарĕ, йывăр аттисемпе хаплаттарса, Хуралев килсе кĕчĕ. Халĕ ĕнтĕ Нина амăшĕ — Униççе шикленмеллипех шикленсе ÿкрĕ.

— Чим-ха, кĕрÿ...—терĕ вăл чĕтрекен сасăпа.

Кĕрÿшĕ те, хăлхасăр пулнă пекех, нимĕн те чĕнмерĕ, сапаланчăк куçĕсемпе унăн-кунăн пăхкаларĕ те малти пÿлĕме кĕрсе кайрĕ. Униççе икке пÿлĕм алăкĕ патне пырса тăчĕ. «Нихçан харкашман паян пуçларĕç-и кăсем?!» терĕ вăл чунĕ кансĕрленнипе, шăппăн.

... Упăшки çапла хыççăнах килсе кĕни Нина Павловнăна тата ытларах кÿрентерчĕ. Вăл çакна кĕтменччĕ, чунĕ пăлханнине пĕччен ирттерсе ярасшăнччĕ.

— Кам кÿрентерчĕ сана, Нина?—мĕнле те пулин ачашшăнрах та лăпкăнрах ыйтма тăрăшрĕ Хуралев, анчах унăн хулăн сассинче ытлашши ачашлăх палăрмарĕ.—Кала-ха, мĕн пулчĕ?

Упăшки патнелле çурăмпа тăракан Нина Павловна сасартăк çаврăнчĕ те:

— Ыйтатăн тата!—терĕ çилĕллĕн.

Хуралев хăйĕн арăмĕ кун пек пулнине халиччен нихçан та курман. Нинăн яланхи таса кăвак куçĕсенче халĕ темĕнле ырă мар кăвар ялкăшса тăрать, кăшт шуранкарах сăнĕ хĕрелсе кайнă, тути хĕррисем йĕттĕн-йĕттĕн чĕтреççĕ. Сакна курсан, Хуралев йăлтах аптраса ÿкрĕ, чĕлхи çăвар маччи çумне çыпăçса ларчĕ, шалта пĕтĕм ÿпке-пĕверĕ пăрланса ларнă пек пулчĕ. çан-çурăмĕ тăрăх сивĕ çĕна чупса иртрĕ. Пуçĕнче вара вĕри шухăш хăвăрттăн çиççе илчĕ: «Юратнă Нинук...» Вăл, айăпа кĕнĕ ача пек, пуçне пĕкрĕ.

Нина Павловна упăшкине чи хаяр сăмахсемпе вăрçса тăкма хатĕрччĕ, анчах халĕ унăн «пысăк Мишши» пĕр самантрах çемçелсе кайнине курчĕ те çуллахи çавра-çил пек кăмăлĕ лăштăрах лăпланчĕ.

— Эх, Миша!.. Михаил Петрович...—çапла çеç каларĕ вара вăл хĕрхенчĕк сасăпа.—Санран пурте кулаççĕ, эс нимĕн те сисместĕн.

Арăмĕ ăна вăрçса тăкнă пулсан, ырăрах та пулатчĕ-и, тен?!. Хуралев хăй çавна çеç кĕтнĕччĕ. Анчах ун вырăнне вăл пачах та урăх сăмахсем илтрĕ. «Пурте кулаççĕ»... Михаил Петровичăн кăкринчи пăр туххăмрах ирĕлсе кайрĕ те пĕтĕм ăшчикĕ вĕресе çĕкленчĕ, хура-хăмăр куçĕсем тата ытларах тĕксĕмленчĕç.

— Камсем кулаççĕ?—кĕмсĕртетсе кайрĕ унăн сасси.—Камсем?

Çук, Нина Павловнăн упăшкипе харкашас килмест, çапах та чылайранпа пухăнса пынă шухăша хăçан та пулин каласа памаллах. Ытти çынсем çеç мар, Нина Павловна хăй те юлашки вăхăтра лайăххăн туя пуçларĕ: Михаил Петрович МТС-ри главнăй инженер вырăнĕнче ĕçлеме пултараймасть... Хăй урапи çинче мар вăл... Хĕрхенÿ кăмăлĕ тепле вăйлă пулсан та, Нина Павловна халĕ сăмаха пат тÿррĕн татса калама шут тытрĕ. Тĕрĕссипе, çакăн çинчен тин кăна мар шухăшланă вăл халĕ ак тахçантанпа ыраттарса пурăннă тĕвве салтса яма май килсе тухрĕ «Камсем кулаççĕ?..»

— Хăвăн юлташусемех тăрăхлаççĕ,—терĕ Нина Павловна.—Сана «Эпир халех» тесе чĕнеççĕ. Чухла, мĕне пĕлтерет ку сăмах.

— Мĕнле — «Эпир халех?»—ним калама аптранипе ыйтрĕ Михаил Петрович, анчах хăй çак сăмах мĕне пĕлтернине сиссенех ăнланса илчĕ.—Кам калать ăна?

— Камĕ—пурпĕрех-ха вăл. Санăн, Миша, вĕренме каймалла пулать,—терĕ Нина Павловна лăпкăн çеç.—Халь вĕренмесĕр май çук.

— Апла иккен...

Михаил Петровичăн кĕрнеклĕ пĕвĕ сасартăк пĕчĕкленсе ларнă пек пулчĕ. Вăл лÿпперрĕн çаврăнчĕ те тулалла мăкăртаткаласа тухса кайрĕ.

— Юрать, хăвалăр мана, хăвалăр. Ĕçлерĕм-ĕçлерĕм те—халь кăларса ывăтăр.

Упăшки тухса кайсан Нина Павловна пĕр самант вырăнтан та хускалаймасăр тăчĕ. Унтан чĕри темĕнле хавшаса килчĕ, вăл вара сĕтел умĕнчи пукан çине пырса ларчĕ. Алăк патĕнче тăракан амăшĕ, кĕрÿшĕпе хĕрĕн калаçăвне пĕтĕмпех илтнĕскер, хĕрне лăплантарас тесе, пÿлĕмелле ерипен утса кĕчĕ.

— Кирлĕ мар, анне,—терĕ Нина Павловна,—эс хăвăн ĕçÿпех аппалан. Шухăшлама ирĕк пар...

— Эпĕ—мĕн, нимĕн те мар,—тевелесе, амăшĕ каялла тухрĕ.—Хуллентерех эс, хĕрĕм, хуллентерех... Харкашас марччĕ...

... Кун пек те килсе тухать иккен вăл—пурнăç. Виçĕмçул Нина Павловна Ивгусева,—ун чухне вăл Нина, Нинук кăначчĕ-ха,—ялхуçалăх институтне вĕренсе пĕтерчĕ те ăна, хăй ыйтнипе, МТС-а ĕçлеме ячĕç. Мĕнех вара? Пит аван, пурнăçа çывăхарах тинкерсе тĕпчемелле, хамăр алăпа тырпул туса пăхмалла. Кунта килсен, вăл пуçĕпех вĕри ĕçе кĕрсе кайрĕ. Ĕçсĕр пуçне ыттине пĕтĕмпех манасшăнччĕ вăл, анчах ун чĕрине главнăй инженер вырăнĕнче ĕçлекен паттăр та хастар йĕкĕт Хуралев пĕррех курсанах кĕрсе вырнаçрĕ те ниепле те тухма пĕлмерĕ.

«Эпир халех!» тетчĕ вăл, пĕр участокран тепĕр участока çил пек вĕçтерсе çÿресе. МТС-ра вăл чăн малтанхи трактористсенчен пĕри пулнă. Механизаторсен пусми тăрăх çÿлтен çÿлелле хăпарса пынă: бригадир помощникĕ, бригадир, участокри механик, фронтра—танкист, командир. МТС-а таврăнсан—тÿрех главнăй механик вырăнне. Инженер ĕçĕ. анчах ун чухне инженерсем тивĕçместчĕç те — мĕн тăвăн-ха? «Эпир халех!» Виçĕмĕш бригадăра комбайн чарăнса ларнă, ниепле те ĕçе яраймаççĕ,—эпир халех! Улттămĕш бригадăра пĕр тракторăн дизелĕ стройран тухнă,—эпир халех! Пур ĕçе те çапла—эпир халех!

Епле юратмăн-ха кун пек хастар çынна? Çур çул пек ĕçлесен. Нина Ивгусева Миша Хуралева ĕмĕрлĕхех юратса пăрахрĕ. Вĕсем пĕрлешрĕç, пĕтĕм МТС йышĕпе туй турĕç. Нина хăйĕн çывăх тусне «Миша» тесе чĕнесшĕнччĕ, тусĕ ăна кун пирки пат татса çапла каларĕ:

— Ун пек ытлашши ачаш. Мишша тесе чĕнсен — аванрах пулать, çирĕпрех,—анне те мана çапла чĕнетчĕ,—терĕ.

Юрать. Мишша пултăр эппин—пысăк Мишша.

Чăн та, «пысăк Мишшан» алли кирек мĕнле машинăшăн та чаплă хирург алли пекехчĕ, анчах МТС-а çултан-çул çĕнĕрен çĕнĕ машинăсем киле пуçларĕç. Çĕнĕ йышши тракторсем, çĕнĕ йышши комбайнсем, çĕрулми лартмалли те кăлармалли агрегатсем... Хуралев аллине кĕнеке сахал тытатчĕ, вăхăчĕ те çукчĕ пуль çав. Пурне те халех тумалла-çке-ха. Нина ăна вĕренме кирли çинчен асăрхаттарсан, вăл яланах:—Эпир кĕнеке тăрăх мар, практикăра вĕренетпĕр. Пурнăç кĕнеки темле лайăх кĕнекерен те ăслăрах,—тетчĕ.—Эпир кĕнекечĕсем мар, практиксем!

Акă халь пăх та кур ĕнтĕ: çынсем ăна «Эпир халех» тесе чĕнеççĕ иккен...

Нина Павловна çаксене йĕркипе аса илсе тухрĕ те ура çине тăчĕ.

— Директорпа хамах кайса калаçатăп,—терĕ вăл çирĕппĕн.—Мишшана вĕренме ямалла. Халĕ, çĕнĕ постановлени тăрăх, МТС-сене инженерсем килме тивĕç. Пирĕн пата та ярса парĕç-ха.

Хăйĕн сăнĕнче ун пек кун пек пăлханни палăрмасть-ши тесе, Нина Павловна тĕкĕр умне пырса тăчĕ. Пичĕ, чăн та, хĕрелнĕ, куçĕсем те шывланнă, анчах ытлашши сисĕнмеллех мар. Тепĕр тесен, юрĕ-çке,—пăлханмасăр тумалла ĕç мар. Вăл пуçĕнчи чечеклĕ косынкине тÿрлеткелерĕ, сапаланнă сарă çÿç пайăркисене пуçтаркаларĕ, унтан хăй халь çеç пăлханса иртнĕ пирки ирĕксĕррĕн йăл кулса илчĕ те урамалла тухрĕ.

Малта пыракансен опычĕ

ПУЯНЛĂХ ÇĂЛКУÇĔСЕМ

Мускавран темиçе километрта, асфальт сарнă çулăн икĕ айккинче, Раменски районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз вырнаçнă.

Кунта Совет Союзĕн пур кĕтесĕсенчен те тата урăх çĕршывсенчен кашни кунах çырусем килсе тăраççĕ, йышлă делегацисем пырса каяççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан артель хăш енĕпе чапа тухнă-ха? Ку колхоз пирĕн çĕршыври колхозсем çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче пулмалли шайран иртсе кайнă.

Молотов ячĕпе тăракан колхозăн кашни 100 гектар çĕр пуçне мăйракаллă шултра выльăхсемпе ĕнесен йышĕ çитес икĕ-виçĕ çул валли палăртниччен пĕр хут çурă ытларах, кунта кашни ĕнерен сумалăкне 4.208-шар килограмм сĕт суса илеççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз пуянлăхĕн çăлкуçĕсем ăçта-ха?

Укçа-тенкĕ тупăшĕсем виçĕ хут ÿснĕ. Вăл тупăш халĕ 3 миллиона çитет. Колхозниксем пĕрлешиччен илнинчен виçĕ хут ытларах тупăш илме пуçларĕç. Пĕр ĕçкунĕ хакĕ, укçа çине куçарсан, 25 тенкĕ пулать.

Пĕрлешнĕ колхоза чаплă организатор, хăйĕн ĕçне юратакан тата лайăх пĕлекен çын—коммунист Николай Иванович Пузанчиков юлташ ертсе пырать. Коммунистсен партийĕпе колхоз стройĕ ÿстернĕ кадрсем çинчен Николай Иванович савăнса тата мухтанса калаçать.

Коммунистсемпе комсомолецсем — колхозри ертсе пыракан вăй. Вĕсем 100 çынтан иртеççĕ. Вĕсем производствăн татса паракан участокĕсенче бригадирсем, механизаторсем тата ферма работникĕсем пулса ĕçлеççĕ. Парти организацине хăйсен колхозĕн çынни—агроном Усачев юлташ ертсе пырать. Коммунистсем хăйсен хастарлă ĕçĕсемпе колхозниксене ĕçре çитĕнÿсем тума хавхалантараççĕ.

Колхоз председателĕ колхоза, пĕтĕм участоксене кашни кун пĕлсе ертсе пырать. Шурăмпуç хĕрелсе кăна килет-ха—Николай Иванович фермăсенче, хирте. Каçхине, бригадирсен отчечĕсене итлесе çитес кун валли задачăсем кăларса тăратнă чух, вăл ĕçе пур енчен те тĕплĕн виçсе пăхать, çитменлĕхсене критиклет, кашни кун малалла каяс тесен мĕн тумалли çинчен калать. Анчах ĕçе парăнса туни кăна çителĕксĕр. Пĕлÿ кирлĕ. Колхоз—нумай енлĕ хуçалăх. Председатель вĕренме тытăннă. Молотов ячĕпе тăракан колхозра агрокабинет организациленĕренпе темиçе çул çитет. Кунта агротехника курсĕсем ĕçлеççĕ. Вăтăр тăвата коммунист, çавăн чухлех комсомолецсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем, уйхирте ĕçлекенсем—пурте агротехника пĕлĕвĕсемпе çине тăрса хĕçпăшалланаççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз—хула сывăхĕнче. Акмалли çĕр лаптăкĕ унăн нумай мар, пурĕ те 600 гектар кăна. Çĕртен вăл мĕн пама пултарнине йăлтах илес тесен, хуçалăха пĕлсе ертсе пырас пулать.

Колхозниксем мĕнпур отраслĕсене: выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине те, пахча çимĕç лартса ÿстерессине те аталантарса пыраççĕ. Колхозăн 50 гектар ытла çĕр çинче сад пур, кайăк-кĕшĕк йышлă. Кроликсем ĕрчетеççĕ, утар пур.

Пахча çимĕç лартса ÿстерсе колхоз пысăк тупăш курать. Юлашки çулсенче вăл тупăш 846 пин тенке çитнĕ. Иртнĕ çулта колхоз кашни гектартан 300-шер центнер пахча çимĕç пухса кĕртнĕ. Пахча çимĕç акса тумалли çĕр лаптăкĕ çине кашни гектар пуçне 25—30-шар тонна тислĕк тăкнă, минераллă удобренисем сапнă. Ку вăл пахча çимĕç тухăçлăхне икĕ хута яхăн ÿстернĕ. Пахча çимĕç ÿстерекенсем кăçал пахча çимĕç культурисен калчисене акса ÿстерес ĕçре торфпа çĕрĕк тăпри чÿлмекĕсемпе усă курнă. Ун пек чÿлмексем çур миллион ытла туса хатĕрленĕ пулнă. Чÿлмексенче ÿстернĕ калчапа усă курни купăста тухăçлăхне кашни гектар пуçне 10 центнер чухлĕ ÿстернĕ.

Анчах хуçалăхăн чи пысăк та тупăшлă отраслĕсенчен пĕри — выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси пулать. Ун çинчен артелĕн тупăшĕсем лайăх каласа параççĕ. Иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе колхоз 1.700.000 тенкĕ ытла тупăш курнă. Ĕне ферми кăна 1.320.000 тенкĕ тупăш панă.

Колхозăн улăх-çарансем çителĕксĕр. Çавăнпа та колхоз курăк акмалли пусă çаврăнăшне лайăх йĕркеленĕ. Клеверпа тимофеевка акма чи лайăх çемçетнĕ, удобренисем кăларнă çĕр участокĕсем уйăраççĕ. Çавăнпа та колхоз кашни гектартан 45—50-шар центнер утă пухса кĕртет.

Практика çакна кăтартса парать: рациона тĕрĕс те пĕлсе тусан кăна ĕнесем сĕт парасси нумай ÿсет. Пĕлсе тунă рацион сĕт суса илессине кăна мар, сĕт пахалăхне те ÿстерет. Рациона 20—25 килограмм силос е симĕс курăк кĕртни сĕтре çын организмĕшĕн хаклă А витамина виçĕ хут ÿстерет. Çавăнпа та ĕнтĕ колхозăн нумаях пулмасть туса пĕтернĕ силос башнинче кашни ĕне пуçне пилĕкшер тоннăран кая мар силос хывнă. Силос валли колхозра хĕвелçаврăнăш акаççĕ, рацион тата лайăхрах пултăр тесе, тымарçимĕçсем те акса тăваççĕ. Колхозри зоотехник В. Киреева уйăхра икĕ хут ĕнен рационне тепĕр хут пăхса тухать. Рациона выльăхăн тухăçлăхĕ тата чĕрĕ виçи улшăннине кура улăштараççĕ.

Паллă ĕнтĕ, выльăх-чĕрлĕхе витере усранă чух симĕс конвейер пысăк вырăн йышăнать. Молотов ячĕпе тăракан колхозра симĕс конвейера мĕнле йĕркеленĕ-ха?

— Симĕс апата каякан ÿсентăрансене эпир тăхăр пусăллă уйрăм пусă çаврăнăшĕнче акатпăр,—каласа парать колхоз председателĕ Пузанчиков.—Кунта 9 гектар кĕрхи ыраш, 28 гектар пĕр çул ÿсекен курăксем, 40 гектар нумай çул ÿсекен курăксем, 15 гектар улăх-çаран кĕреççĕ. Пĕр çул ÿсекен курăксене виçĕ срокра: апрелĕн 25-мĕшĕнче, майăн 12-мĕшĕнче 25-мĕшĕсенче акаççĕ. Унсăр пуçне эпир выльăх-чĕрлĕх валли симĕс апат тума пахча çимĕç юлашкисемпе — выльăх кăшманĕ, кишĕр, купăста çулçисемпе усă куратпăр.

Опыт çакна кăтартать: кукуруза тата çĕрулми выльăхсемшĕн питех те паха культурăсем пулса тăраççĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхозра çак культурăсене акса ÿстерес ĕç çине тимлĕ пăхаççĕ. Сăмахран, çĕрулми 160 гектар йышăнать. Колхозниксем кашни гектартан çулсерен 160—180 центнер çĕрулми пухса кĕртеççĕ. Колхозниксем хăйсем умне çакăн пек задача лартнă: çитес вăхăтрах çĕрулми тухăçлăхне икĕ хут ÿстермелле. Ăна пурнăçламалли çул—çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартасси, çĕрулми лартас, ăна пăхас тата пухса кĕртес ĕçсене пĕтĕмпех механизацилесси.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем мичуринла агробиологи наукин никĕсĕсене лайăх вĕренсе çитнĕ. Вăл наукăн никĕсĕсем çакна вĕрентеççĕ: çутçанталăк условийĕсем, этем туса хатĕрлекен условисем выльăх-чĕрлĕхпе ÿсентăрансене çĕнетсе лайăхлатаççĕ.

Çак условисен системинче апат кăна мар, выльăх-чĕрлĕх витисем, унти ĕç йĕрки, кашни выльăха уйрăм пăхни пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан колхозăн выльăх-чĕрлĕх витисем çине пăхсан, эсир кунта обществăлла выльăх-чĕрлĕхе наука хушнă пек пăхнине куратăр.

Иртнĕ çулта колхоз выльăх-чĕрлĕх витисем тума 600 пин тенкĕ ытла расходланă. Çак укçа-тенкĕпе сысна, пăру витисем, апат хатĕрлемелли цех, ĕнесене сумалли зал, водопровод туса лартнă. Кăçал автогараж, силос башни, выльăх вити патне пымалли асфальт сарнă çул тунă, халĕ выльăх апачĕ усрамалли хранилище тăваççĕ.

Çитес çулта 1.500 чăх-чĕп валли вите, тислĕк хывмалли хранилище, шыв пĕрĕхмелли установка туса лартаççĕ.

Колхозри мĕнпур выльăх-чĕрлĕх витисене электрификациленĕ тата механизациленĕ.

Эсир выльăх-чĕрлĕх витисем патне пыратăр та хăвăра-хăвăр ĕненместĕр: çакăн пек илемлĕ çурт-йĕрсенче выльăхсем пурăнаççĕ-ши вара? Ку çурт-йĕрсем тулашĕнчен кăна мар, шалтан та илемлĕ. Фермăри ĕç те хăйне кура илемленсе, лайăхланса пырать.



Молотов ячĕпе тăракан колхозферминче (Мускав облаçĕнчи Раменски районĕ).

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ĕне сумалли зал. Доярка Социализмла Ĕç Геройĕ Новикова юлташ электричествăпа ĕçлекен аппарата ĕне сума майлаштарса лартать.

Т. ДУНАЕВА фотоÿкерчĕкĕ.

Дояркăсемпе выльăх пăхакансем йывăр ĕçсене: выльăх апачĕ хатĕрлес, ăна илсе пырас, тислĕк тасатас, шыв кÿрсе килес ĕçсене тумаççĕ. Çак ĕçсене машинăсем тăваççĕ. Фермăра ĕçлекенсем выльăхсене пăхассине лайăхлатса пыраççĕ çеç. Ĕне витинче автопоилкăсем вырнаçтарнă, подвеснăй çулсем тунă, ĕнесене электричествăпа ĕçлекен щеткăсем тасатаççĕ. Акă апат кухни. Кунта тымарçимĕçсене, утă-улăма касса вĕтетекен машинăсем, турантă вĕтетекен машина, тырă авăртмалли арман, çĕрулми ватакан машина вырнаçтарнă, выльăх апатне пăспа çемçетмелли камерăсем пур.

Выльăх пăхакансем фермăри культурăна лайăхлатассишĕн, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Çакна ĕне сумалли залри ĕçсенчен лайăх курма пулать.

Ĕне сумалли залра сĕт çуллă пултăр тесе кăна мар, сĕт таса пултăр, ăна сыхласа усранă чухне ан пăсăлтăр тесе тăрăшаççĕ. Эпир çак зала пырса кĕретпĕр. Вăл малта пыракан промышленность предприятийĕнчи лайăх йĕркеленĕ цехран нимĕн енчен те уйрăлса тăмасть. Зал хăйĕн тасалăхĕпе, сумалли аппаратсен хитрелĕхĕпе савăнтарать, тĕлĕнтерет. Залри алăксем çинче табличкăсем çакăнса тăраççĕ. Вĕсем çинче «молочная», «моечная», «душ», «дояркăсен пÿлĕмĕ», «зоотехник кабинечĕ» тесе çырнă. Зала çавăтса кĕртиччен ĕнене санитари правилисем тăрăх ятарласа тунă станокра тасатаççĕ. Ĕне çиллине шлангран тухакан ăшă шывпа çуса тасатаççĕ. Сĕт тухăçлăхне ÿстерес çĕрте ĕне йĕркеллĕ тăни, ăна тасатни, массаж туни пысăк вырăн йышăннине палăртмалла.

Акă ĕне çилли çине сăвакан аппарат вырнаçтарнă. Сĕт электричество вăйĕпе сăвакан машинăн стаканĕсене, ун хыççăн кантăкран тунă сĕт виçекен савăта юхать. Вăл савăтран вара сĕт кантăкран тунă хулăн трубасем тăрăх холодильнике юхса кĕрет. Холодильник сăвакан цехпа юнашар вырнаçнă. Холодильникрен сĕт вĕри шывпа тĕплĕ çуса тасатнă бидонсем тăрăх саланать. Бидонсене ытти савăт-сапана çунă пекех, ятарласа хатĕрленĕ пÿлĕмре çăваççĕ. Вăл пÿлĕмре шыва электричество вăйĕпе ăшăтаççĕ. Ĕнесене колхозра талăкра тăватă хутчен сăваççĕ, çавăн чухлех апат параççĕ. Ĕнесене икĕ хутчен уçăлма илсе тухаççĕ.

... Ĕç кунĕ вĕçленчĕ. 17 доярка хăйсен пÿлĕмне пухăнчĕç. Ферма заведующийĕ Вера Николаевна Стогова юлташпа пĕрле вĕсем паянхи ĕçсен итогне пăхса тухаççĕ. Кăтарту хăми çинче чуна савăнтаракан çĕнĕ цифрăсем курăнса каяççĕ.

Социализмла Ĕç Геройĕ Прасковья Сергеевна Новикова хăйпе пĕрле ĕçлекен Клавдия Васильевна Январева юлташпа 20 ĕнерен талăкра 275 литр сĕт суса илме обязательство илнĕ. Государство панă план—201 литр. Дояркăсем паян та плана ирттерсе тултарнă. Кăçалхи сакăр уйăх хушшинче вĕсем кашни ĕнерен 3.557-шер литр сĕт суса илнĕ.

Выльăхсен кашни кунхи тухăçлăхне пĕлсе тăни выльăх пăхакансене чи лайăх тухăçлă ĕнесене суйласа илме, вĕсен йăхне лайăхлатма май парать.

... Колхозăн ялта электричество çути ялкăшать. Вăл—пысăк телейĕн, пуян та культурăллă пурнăçăн çутти. Пурнăç тата лайăхрах, савăнăçлăрах пулмалла. Çавăн пек ырă та телейлĕ пурнăç патне утмалли çула пире КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсем кăтартса тăраççĕ.

В. ТАРАЩАНЕЦ.

— Астăвăр, тем, ытлашши ĕç туса ан хурăр,—тесе ăсатрĕ ăна амăшĕ.

... Кĕрхи çанталăк тикĕс мар. Ирпе кăна хĕвел пăхатчĕ, халĕ пĕтĕм тÿпене нÿрĕ пĕлĕт туртса илнĕ, хушăран çумăр та ÿккелет.

Нина Павловна дирекци çурчĕ умĕнче кăшт чарăнса тăчĕ: «кĕрес-и, çук-и? Тен, малтан Мишшапа хăйĕнпе лайăхрах калаçса пăхас?!.» Çапла иккĕленсе-иккĕленех вăл алăк уçрĕ те кантуралла кĕчĕ. Директор пÿлĕмĕн алăкне тĕртсе пăхрĕ,—питĕрĕнчĕк. Куншăн Нина Павловна кăшт савăнчĕ те-ха: директорпа каярах, кăмăл лăпланса, калаçма лайăхрах пулать. Вăл акă каялла çаврăнса кайма тăнăччĕ, бухгалтери пÿлĕмĕнчен секретарь-машинистка Феня тухрĕ.—МТС-ра хăçан, мĕн пулса иртнине йăлтах пĕлекен Феня.

— Сире, Нина Павловна, директор кирлĕччĕ-и?—тесе ыйтрĕ вăл, темĕнле юри йĕкĕлтенĕ пек кулкаласа.—Вĕсем леш çĕнĕ машина патне тухса кайрĕç. Шупашкартан çĕнĕ инженер килнĕ. Питĕ интеллигентла çын. Яланлăхах пирĕн патра юлмалла, тет. Вĕсем директорпа пĕрле...

Халĕ ĕнтĕ Феня Нина Павловна çине хĕрхенекен куçсемпе пăханçи пулчĕ. Анчах Нина Павловна, çак хыпара тахçан кĕтнĕ пекех, машинисткăна лăпкăн çеç хуравларĕ:

— Питĕ аван, питĕ аван,—терĕ вăл.—Эпир те кайса паллашар эппин интеллигентла çынпа.

Феня, вăрçан улми çыртнă пек, тутине пăркаласа юлчĕ.

Вăрлăх тасатмалли цехра халăх, паçăрхи пек мар, чылай нумайрах пухăннă. Нина Павловна хăйхи «интеллигентла çынна» кĕрсенех ыттисенчен уйăрса илчĕ, ăна хăйне çеç никам та асăрхамарĕ. Уçă сăн-сăпатлă, вăтăртан иртнĕ çын, сăпай та типтер тумланнăскер. Вăл электромагнит вăйĕпе курăк вăрлăхĕсем тасатакан машинăна тĕрĕслет, тем ăнлантарать. Сасси те, сăнĕ пекех, уçă.

— Çĕнĕ çурт—тет вăл.—урай та, стенасем те типсе çитмен. Тулта çанталăк нÿрĕ тăрать. Сывлăш чĕрĕ. Кабельсене тĕрĕсех вырнаçтарнă пулсан, урăх сăлтав çук. Машинăна тĕрĕс ĕçлеме индукци токĕ чăрмантарать.

— Чăн та!—сасартăк янăраса кайрĕ кунта Ваня Тарганов сасси.—Машинăна хута ярсан, акă, стенана пÿрнепе тĕртсе пăхăр-ха. Пĕтĕм стенара—электричество.

Инженер (çĕнĕ çын çавă ĕнтĕ вăл) Ваня çине тинкерсе пăхрĕ те йăл кулса илчĕ.

— Эс ăна, йĕкĕт, хăçантанпа асăрханă?—тесе ыйтрĕ вăл тÿрех.

— Малтанах...—тем айăпа кĕнĕ пек хуравларĕ Ваня Тарганов.

— Мĕншĕн ку таранччен никама та каламан?

— Пирĕн мĕн...—Ваня кунта Хуралев çине пăхса илчĕ те шăпланчĕ. Анчах уншăн тахăшĕ кĕтмен çĕртен: — «Эпир халех!» пур пирĕн,—тесе хучĕ.

Çук, никам та кулакан пулмарĕ. Инженер, хайхи, нимĕн ăнланаймасăр, директора куçран тинкерчĕ.

— Мĕнле—«Эпир халех»?

— Ун çинчен кайран, Иван Николаевич,—терĕ директор, кулкаласа. — Халь мĕн тумалла пулать-ха пирĕн ку цехпа?

— Тимĕр кăмакасем пур-и?—татса калас вырăнне хăй ыйту пачĕ инженер.

— Вĕсем пур-ха, общежити складĕнчех...

— Халех, ик-виçĕ тимĕр кăмака лартмалла та пÿлĕме лайăх кăна типĕтмелле, вара курăпăр. Ытти вак-тĕвексем пулсан, кайран тĕрĕслĕпĕр.

Сăмах пĕтрĕ. Çынсем пурте çăмăллăн сывласа ячĕç. Директорпа инженер алăк патнелле утрĕç. Çак самантра Нина Павловна çеç ниçта кайса кĕрсе пĕлмесĕр çунса тăчĕ. «Намăс, намăс, намăс! Мĕн тери намăс! Юрать-ха, халăх нумай та ăна асăрхаканнисех çук».

Алăк патĕнче директор чарăнса тăчĕ.

— Михаил Петрович,—терĕ вăл, çынсем хушшинче Хуралева шыраса тупса,—ас ман пата кĕр-ха...

— Халех-и?—хăй сисмесĕрех ыйтрĕ Хуралев.

Çынсем пĕр-пĕрин çине—«Эпир халех!» тенĕн—кăн-кан пăхкаласа илчĕç, хушăран йăл кулакансем те пулчĕç. «Эх, айван!» терĕ хăй ăшĕнче Нина Павловна.

Вăл малтанах, килне çитсе, минтер çине выртса, тăраниччен макăрас тесе шутланăччĕ, анчах унăн упăшки директорпа калаçнă чухне, теплерен кутăна персе, татах пĕр-пĕр ырă мар ĕç туса хурассине асă илчĕ те çурма-çултан каялла çаврăнчĕ.

Хăюллăнах кĕчĕ Нина Павловна директор патне,—ун чĕринче халь ĕнтĕ çунмалли çунса иртнĕ, намăсланмаллине те тÿссе ирттернĕ вăл. Ĕçе чипер ăс-пуçпа татса парасси çеç юлнă.

Нина Павловна пÿлĕме кĕрсен, директор ура çине тăчĕ.

— Акă пирĕн агроном Ивгусева юлташ, паллашăр,—терĕ вăл, икĕ аллипе те Нина Павловна еннелле кăтартса. — Сăмах май, Хуралев юлташăн мăшăрĕ.

— Шатров,—кĕскен кăна пĕлтерчĕ инженер.—Пĕрле ĕçлĕпĕр.

Анчах Михаил Петрович Хуралев чĕринче мĕн пулса иртнине курас пулсассăн!.. Çак пÿлĕмри кашни сăмах халь унăн чунне йывăр чул пек пыра-пыра тивет. «Сăмах май, Хуралев юлташăн мăшăрĕ... Пĕрле ĕçлĕпĕр... Мĕншĕн—сăмах май çеç? Мĕнле вăл—пĕрле?..» Çук, Хуралев хăйĕн шалти кăмăлне вилсен те çынна палăртмасть,—уйрăмах çакă çĕнĕ инженера. Арăмĕ çине кăна вăл хаяррăн пăха-пăха илет, пур инкек те унран, арăмĕнчен килнĕ, тейĕн.

— Çапла, Михаил Петрович, сан вĕренмеллех пулать,—терĕ директор, самантлăха татăлнă калаçăва çĕнĕрен хускатса.—Халь акă механизаторсене вĕренме мĕн тери лайăх майсем туса панă.

— Çук, Василий Андреич, хамăр МТС-ран эпĕ ниçта та каймастăп,—пат татса хучĕ Хуралев.—Эпĕ кунта çитĕннĕ, çын пулнă, кунта ман—пĕтĕм пурнăç. Куçарăр мана ахаль тракториста.

— Чăн-чăн çын пулас тесен, вĕренмелле. Сана эпир чăн-чăн çынах тăвасшăн,—лăпкăн çеç каларĕ директор.

— Вĕренме—çулсем иртнĕ,—çав тери хуçăлнă кăмăлпа тĕртсе хучĕ Хуралев, унтан ура çине тăчĕ.

— Шел, питĕ шел,—терĕ директор Хуралевăнни пек сасăпах.—Эпир сан пирки ырăрах шухăшланăччĕ.

Пачах кĕтмен çĕртен тенĕ пек, Нина Павловна та ура çине сиксе тăчĕ.

— Ан тивĕр ăна, Василий Андреич, ан тивĕр!—терĕ вăл, хăвăрттăн та вĕриленсе.—Шухăшлама ирĕк парăр ăна. Вăл хăех, хăех...

Нина Павловна, халь-халь йĕрсе ярас пек тăвăлса çитсе, аллине сулчĕ те тулалла вăркăнчĕ.

... Мĕн калаçнă çĕр каçиччен арăмĕпе упăшки, ăна никам та пĕлмест, анчах вĕсем иккĕшĕ те тепĕр ирхине ирех директор патне пырса çитрĕç. Директор, Василий Андреич, ирхине, çынсем пухăниччен, хăйĕн кабинетĕнче ларкалама юратать. Кăнтăрла ăна кунта тĕл пулма çăмăлах мар.

Михаил Петровичпа Нина Павловна çакăн пек килсе кĕни директора пачах та тĕлĕнтермерĕ,—вăл кĕтнĕ çапла пуласса, шаннă.

— Вĕренмеллех пулать, Василий Андреич,—терĕ Хуралев хăюсăррăн, экзамен тытакан ача пек, мăнттай кÿлепипе енчен еннелле тайкаланса.—Вĕренмесĕр май çук.

— Ĕнерех çапла каламалла!..

— Ĕнер—мĕн... ют çын умĕнче...

— Ют çын мар, вăл—пирĕн главнăй инженер.

— Мана,—терĕ унтан Нина Павловна, кулкаласа,—мана, Василий Андреич, колхоза ăсатăр. Ан тив, халлĕхе чи кая юлнă колхоз пултăр. Тепрер çултан — курăпăр.

— Эпир халех!—хулăн сасăпа хушса хучĕ директор, Хуралев çине чеен пăхкаласа.—Эпир халех кун пирки приказ çырма пултаратпăр.

Вĕсем виççĕшĕ те, хавасланса кулса, пĕр-пĕрин аллисене чи çывăх тăвансем пек тыта-тыта чăмăртарĕç. Ку вăл—тĕлпулу та, уйрăлу та пулчĕ.

— Ырă сунатăп сире, тăвансем, ырă сунатăп,—терĕ директор.—Вĕренме, ĕçлеме, телейлĕ пурăнма!..

Аркадий ЭСХЕЛЬ.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ

„Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн ĕçĕсем çинчен тунă отчет тĕлĕшпе тата пурнăç шайне лайăхлатассишĕн, миршĕн пыракан кĕрешÿре ĕçсыннисен пĕрлĕхлĕ ĕçне тĕреклетес енĕпе профсоюзсем умĕнче тăракан малашнехи задачăсем çинчен“ йышăннă

РЕЗОЛЮЦИ

1953 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче 21-мĕшĕсенче Венăра пулса иртнĕ Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресне хутшăннă 819 çын — Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацине кĕрекен тата унта кĕмен профсоюз организацийĕсем янă çынсем, çавăн пекех хăйсем ĕçлекен вырăнсенче суйланнă, тĕрлĕрен политикăлла тата тĕн юхăмĕсене палăртса тăракан ĕçсыннисем—пурнăç шайне лайăхлатассишĕн, миршĕн пыракан пĕрлĕхлĕ кĕрешĕве мĕнпур ĕçсыннисене пĕтĕçтерессишĕн çине тăрса тăрăшма хатĕр пулни çинчен пĕлтереççĕ.

79 çĕршыври 88.600 пин ĕçсынни — хăйсен делегачĕсене конгреса суйласа янă çынсем, конгреса хатĕрленес ĕçе хутшăннă миллионшар ытти ĕçсыннисем пĕрлĕхре хăйсен вăйĕн çăлкуçĕпе хăйсен кĕрешĕвĕнче çитĕнÿ тăвассин шанчăкне курнине кăна мар, Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацине — вĕсен пурнăçĕн интересĕсене хÿтĕлекене — пĕтĕмĕшпех шанса тăнине кăтартса пачĕç.

Ĕçсыннисем кашнинчех, вĕсем Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн членĕсем пулнипе пулманнине пăхмасăрах, хăйсен требованийĕсене пурнăçлассишĕн, миршĕн кĕрешме тытăнаççĕ пулсан, пурпĕрех Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ майлă тăраççĕ. Вĕсем унăн программине пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ хăйĕн членĕсен ячĕпе кăна мар, мĕнпур ĕçсыннисен ячĕпе кĕрешĕве тухать.

Пурнăçпа ĕç условийĕсене лайăхлатассишĕн, халăхсен наци никама пăханманлăхĕшĕн, пĕтĕм тĕнчери миршĕн пыракан кĕрешÿре Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ хăйĕн ĕçне рабочи класăн пĕрлĕхне вăйлатас тĕлĕшпе туса пырать.

Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен пĕр шухăш-кăмăллă пулассине организацилесе тата вĕсене пĕтĕм тĕнчери профсоюз юхăмĕн опычĕпе паллаштарса, Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ тата унăн производствăлла пайĕсем ĕçсыннисен кĕрешĕвне кирлĕ пек пулăшу парса пыраççĕ.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ мĕнпур ĕçсыннисене, мĕнпур деятельсене, вĕсене хĕсĕрлеççĕ пулсан, хÿтĕлет. Вăл профсоюз прависемпе демократиллĕ ирĕклĕхсем тăвассишĕн массăлла кампанисем организацилет.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ ĕçсыннисен ООН-ри прависене хÿтĕлет, халăх массисен пурнăç шайне ÿстерессишĕн, экономикăпа социальнăй прогресшăн, мĕнпур халăхсем хушшинче мирлĕ майпа килĕштерсе ĕçлессишĕн кĕрешет.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ ĕçсыннисен речĕсене хавшатма пултаракан мĕнпур ĕçсене хирĕç кĕрешет. Вăл профсоюз юхăмне хавшатакансене, рабочи класăн тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларать.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн ĕçне пĕр кăмăллă пулса ырлать.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш конгресĕ пулнăранпа рабочи класс, тата ытларах пĕтĕçсе, капитализмла монополисем ĕçсыннисен прависемпе ирĕклĕхĕсене хĕснине хирĕç пыракан кĕрешĕве хастарлăн вăйлатса пынă.

«Сивĕ вăрçă» тата васкаса хĕçпăшалланни ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатма, вĕсене ĕç тата çăкăр пама пултарасси çинчен калакан юмаха фактсем сирсе ячĕç. Васкаса хĕçпăшалланакан капитализмла çĕршывсенче çар промышленноçĕ аталанать, производствăн мирлĕ отраслĕсем чакса пыраççĕ. Ĕçсĕрлĕх ÿсет. Пурнăç шайĕ чакать, капиталистсен усламĕсем вара нихçанхинчен ытларах ÿсеççĕ.

Совет Союзĕ, Китай Халăх Республики, халăх демократи çĕршывĕсем, Демократиллĕ Германи Республики мир политикине тытса пыраççĕ. Унта ĕçсем пачах урăхла. Мĕнпур пуянлăхсем халăх ырлăхĕ валли каяççĕ. Ку вăл мĕнпур çĕршывсенчи халăхсемшĕн ĕнентерÿллĕ тĕслĕх пулса тăрать.

Конгресс çакна палăртать: ĕçпе пурнăçри лайăхрах условисемшĕн пыракан кĕрешÿре рабочи класăн пĕрлĕхĕ тĕрлĕ çĕршывсенче, пĕтĕм тĕнчере те пĕрмай çирĕпленсе пырать. Ку вăл капитализмла тата колониллĕ çĕршывсенчи халăхсене правительствăсемпе предприяти хуçисене каялла чактарма, хăйсен требованийĕсене пурнăçлаттарма, тĕрмерен рабочисене—активистсене ирĕке кăларма, халăхсен наци интересĕсене шута илме хушма май парать.

Италире, Францире, çавăн пекех Бразилире, Индире, Японире тата ытти çĕршывсенче çĕнтерÿпе вĕçленнĕ аслă забастовкăсем пулса иртни, Францин Африкăри колонийĕсенче ĕç кодексĕ йышăнни, Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн вице-председательне, Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацийĕн генеральнăй секретарьне Ален ле Леапа тата Францири ытти профсоюз деятелĕсене тĕрмерен ирĕке кăларни, Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн вице-председательне тата Кубари ĕçсыннисен руководительне Лафаро Пеньяне ирĕке кăларни—çаксем вĕсем ĕçсыннисем пĕрлĕхлĕ пулнин тата пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисемпе пĕр шухăшлă пулнин пурне те паллă результачĕсем.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕ Гватемалăра, Боливире, Чилире, Золотой Берегра, Индири чугун çул работникĕсем хушшинче, Уругвайри металлистсем хушшинче профсоюз юхăмĕнче организациллĕ пĕрлĕх тунине пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен çĕнтерĕвĕ вырăнне хурса саламлать.

Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисем Совет Союзĕнчи, Китай Халăх Республикинчи, халăх демократи çĕршывĕсенчи профсоюзсемпе тата рабочи класпа пĕр-пĕрне тăванла пулăшса ĕçлесси тата пĕр шухăш-кăмăллă пуласси çирĕпленсе пырать. Совет Союзĕ, Китай Халăх Республики, халăх демократи çĕршывĕсем прогресс çулĕпе, халăх массисен пурнăç условийĕсене вĕçĕмсĕр лайăхлатас çулпа шанчăклăн пыраççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисем капитализмла тата колониллĕ пусмăра хирĕç кĕрешсе тунă историллĕ çĕнтерÿсем çав çĕршывсенчи халăхсен аслă çитĕнĕвĕ пулса тăраççĕ.

Конгресс çакна палăртать: раскольниксен тем тĕрлĕ ирсĕр ĕçĕсене пăхмасăр, çĕршывра, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчере тепĕр хут профсоюзсен пĕрлĕхне тăвассишĕн çине тăрса тăрăшни мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисем хушшинче ытларах та ытларах палăрать.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ капитализмла тата колониллĕ çĕршывсенче экономикăпа социальнăй условисене лайăхлатма, миршĕн кĕрешес тĕлĕшпе «Ирĕклĕ профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери конфедерацийĕпе» тата христианла профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕпе пĕрле ĕçлеме темиçе хутчен те сĕннине конгресс ырлать.

Ку сĕнÿсем ĕçсыннисен интересĕсемпе килĕшсе тăраççĕ. Пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕх рабочи класа çĕнĕ çĕнтерÿсем тума май парассине ĕçсыннисем пĕлеççĕ.

Çавăнпа та конгресс Америкăри ĕçлев федерацийĕн тата США-ри производствăлла профсоюзсен конгресĕн лидерĕсене татăклăн сивлет, мĕншĕн тесен вĕсем халĕ «Ирĕклĕ профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери конфедерацине» хăйсен аллинче тытса тăраççĕ, профсоюз юхăмне вăйсăрлатас тесе тем тĕрлĕ ирсĕр майсемпе усă кураççĕ.

Анчах ĕçсынни массисен пĕрлĕхшĕн тăракан шухăш-ирĕкĕ раскольниксен усал ĕçĕсенчен вăйлăрах. Çав шухăш-ирĕк çĕнтерме тивĕçлĕ.

Рабочисен пĕтĕм тĕнчери юхăмĕн опытне шута илсе, конгресс Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ умĕнче, профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕсем (Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн производствăлла пайĕсем) тата профсоюзсен нациллĕ организацийĕсем умĕнче тăракан тĕп задачăсене палăртать.

Ĕçсыннисен пурнăç шайне лайăхлатассишĕн, миршĕн тата халăхсем хушшинче экономикăпа культура тĕлĕшпе пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлессине сарса ярассишĕн кĕрешесси профсоюзсен яланхи тата тĕп задачи пулса тăрать. Çакна пурнăçлама профсоюзсен ĕçсынни массисем хушшинче хăйсен влиянине вăйлатмалла, профсоюзсене çĕнĕ членсем илмелле, профсоюз организацийĕсем çук çĕрте организацисем тумалла, рабочи класăн пĕрлĕхне тĕреклетмелле, тĕрлĕ енлĕ профсоюзсене кĕрекен, çавăн пекех организацисене пĕрлешмен ĕçсыннисен ĕçне пĕр тĕллевпе туса пырассине йĕркелемелле.

Пĕрлĕх тăвас тесен, чи малтанах, ĕçсыннисене вĕсем ĕçлекен вырăнта пĕтĕçтерес пулать, массăсемпе яланах тачă çыхăну тытмалла, профсоюзсен ĕçсыннисене тĕрĕс те пурнăçа кĕме пултаракан лозунгсемпе кĕрешÿ тĕллевне уççăн палăртса памалла. Çав никĕс çинче ĕçсыннисем килĕшÿ тума пултараççĕ. Пĕрлĕх çапла тума хушать: профсоюзсен демократне пурнăçласа пымалла, ĕçсыннисем умĕнче пĕрле илнĕ обязательствăсене тĕрĕс те тÿрĕ кăмăлпа пурнăçламалла.

Пĕрлĕхлĕ ĕçсем тăвассине пурнăçа кĕртес тата ăна хÿтĕлесе хăварас тесен, пĕрлĕхе чăрмантарма тунă мĕнпур ирсĕр ĕçсене ним тăхтаса тăмасăр тата кирек мĕнле лару-тăрура та тăрă шыв çине кăлармалла. Çакна тăвас тесен, раскольниксен тĕллевĕсем çинчен конкретлă та ĕнентерÿллĕ, витĕмлĕ сăмахсемпе ăнлантарса памалла.

Пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн пыракан кĕрешÿре ĕçсыннисен пĕрлĕхне çирĕплетсе пырса, профсоюзсен капитализмла тата колониллĕ çĕршывсенче: ĕç укçине ÿстерессишĕн;

рабочи арçын е хĕрарăм пулнине, мĕн çултине, раса тата наци тĕлĕшĕнчен мĕнле пулнине пăхмасăр, пĕр тан ĕçшĕн пĕр тан ĕç укçи тÿлемелли принципа пурнăçласа пырассишĕн;

ĕçре халран яракан меслетсемпе усă курассине пĕтерессишĕн, ĕçре хăрушсăрлăх условийĕсем тата гигиена тĕлĕшĕнчен лайăх условисем тăвассишĕн, ĕçсыннисен ĕнси çине тиенекен тÿрĕ тата потреблени таварĕсем çине хуракан налогсене чакарассишĕн;

ĕçсыннисене государствăпа предприяти хуçисен шучĕпе социальнăй страховани тăвассишĕн;

(Юлашки 4-мĕш страницăра).

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ

„Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн ĕçĕсем çинчен тунă отчет тĕлĕшпе тата пурнăç шайне лайăхлатассишĕн, миршĕн пыракан кĕрешÿре ĕçсыннисен пĕрлĕхлĕ ĕçне тĕреклетес енĕпе профсоюзсем умĕнче тăракан малашнехи задачăсем çинчен" йышăннă

РЕЗОЛЮЦИ

(Юлашки. Пуçламăшĕ 3-мĕш страницăра).

рабочисене хирĕç пыракан законсене пăрахăçа кăларассишĕн тата профсоюзсене правасем парассишĕн кĕрешмелле.

Профсоюзсен ĕç укçине ÿстерессишĕн пыракан кĕрешĕвĕ вăйлă та вĕçĕмсĕр пулса пымалла. Çак кĕрешÿ пурнăç хакĕ ÿснине хирĕç, хаксене чакарассишĕн, реальнăй ĕç укçине вĕçĕмсĕр ÿстерсе пырассишĕн пыракан кĕрешÿпе пĕрле пулса пымалла.

Профсоюзсен çакна ăнлантарса памалла: монополисем хăйсен услăмĕсене пĕрмай ÿстерессишĕн тăрăшни пурăнма кирлĕ таварсен хакне ÿстерекен тĕп сăлтавсенчен пĕри пулать.

Ĕç укçине чакарас политикăна, çавăн пекех суя теорисене, сăмахран, ĕç укçине ÿстерме, тавар хакĕсене йÿнетме «май çукки» çинчен калакан теорисене тăрă шыв çине кăлармалла. Вăл теорисен тĕллевĕ ĕçсыннисен кĕрешĕвне вăйсăрлатасси пулса тăрать.

Профсоюзсен ĕç укçине ÿстерессишĕн пыракан кĕрешĕве чăннипех коллективлă ĕç килĕшĕвĕсем тăвассишĕн пыракан кĕрешÿпе сыхăнтармалла.

Колонисемпе çурма колонисенче, çавăн пекех капитализмлă çĕршывсенче ĕç укçи питех те пĕчĕккĕ. Çавăнпа та ĕçсыннисемпе вĕсен çемйисем калама çук начар условисенче пурăнаççĕ. Профсоюзсен правительствăсемпе предприяти хуçисене мĕнпур профессисем валли ĕç укçи сахалтан та мĕн чухлĕ пулмалли çинчен закон йышăнтартарассишĕн çине тăмалла. Вăл ĕç укçи кирлĕ пек пурăнма çитмелле. Çак закон çирĕппĕн пурнăçа кĕтĕр тесе, профсоюзсен çине тăрса кĕрешес пулать.

Конгресс профсоюзсене социальнăй страхованипе социальнăй обеспечени ĕçне хÿтĕлесе лайăхлатас тата ăна сарса пырас ыйтупа пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери конференци йышăннă программăна пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме, социальнăй страховани ыйтăвĕ тăрăх Азире, Латинла Америкăра тата Африкăра 1954 çулта пулмалли континентри конференцисене хатĕрленес ĕçе активлă хутшăнма чĕнет.

Ĕçсыннисен культурăллă шайне ÿстерес тĕллевпе конгресс профсоюз организацийĕсене пурне те обязательнăй йĕркепе тата тÿлевсĕр тăван чĕлхепе нумайрах çулсем хушши вĕрентмелле тăвассишĕн, мир майлă, мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем хушшинчи туслăх майлă чăнчăн демократилле вĕрентÿ тăвассишĕн кĕрешме сĕнет.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн ĕçсыннисен чи кирлĕ ыйтăвĕсене Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕнче тата хăюллăрах кăларса тăратмалла, мĕнпур çĕршывсенчи профсоюзсен вара çак ĕçре ăна пулăшу памалла.

Конгресс профсоюзсене хĕрарăмсемпе çамрăксен организацийĕсемпе пĕрле хĕрарăмсемпе çамрăксен пурнăçри прависене пурнăçлассишĕн тăрăшма сĕнет. Колонилле тата çурма колонилле çĕршывсенчи халăхсене хаяррăн, тĕнчере пуринчен ытла эксплуатацилеççĕ. Вăл çĕршывсенчи ĕçсыннисем империалистсен пусмăрне хирĕç çĕкленеççĕ. Конгресс хăй пĕтĕмпех çав ĕçсыннисем майлă тăни çинчен пĕлтерет. Конгресс мĕнпур ĕçсыннисене, чи малтанах, метрополи пулса тăракан çĕршывсенчи халăхсене колонилле тата çурма колонилле çĕршывсенчи ĕçсыннисемпе пĕр шухăш-кăмăллă пулма тата вĕсене тăванла пулăшу пама чĕнет.

Франци колонизаторĕсем, Америка монополисчĕсем пулăшнипе, сакăр çула яхăн ĕнтĕ Демократиллĕ Вьетнам Республикине хирĕç вăрçă вăрçаççĕ. Конгресс çак колонилле вăрçа чарма требовани лартать. Конгресс 1953 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕ—Вьетнам халăхĕн захватчиксене хирĕç тăмалли нациллĕ кунĕ—Вьетнам халăхĕ майлă активлăн тăмалли пĕтĕм тĕнчери кун, Вьетнамри колонилле вăрçа чарса лартассишĕн кĕрешмелли кун пулса тăни çинчен чаплăн пĕлтерет. Конгресс ĕçсыннисемпе профсоюзсене, пухусемпе, массăлла митингсемпе, демонстрацисемпе тата кĕрешĕвĕн ытти формисемпе усă курса, хăйĕн ирĕккăмăлне палăртма—преступниклă вăрçа чарса лартассине пурнăçлама чĕнет.

Рабочи класăн ÿссе пыракан пĕрлĕхĕ мир ĕçне—мĕнпур халăхсен ырă пурнăçĕн тĕп условине—малтанхинчен ăнăçлăрах хÿтĕлеме май парать.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн пĕтĕм тĕнчери тавлашуллă ыйтусене мирлĕ майпа татса парассишĕн пыракан пĕтĕм тĕнчери кампание ĕçсыннисен анлă массисене хутшăнтарассишĕн тăрăшмалла. Мĕнпур ыйтусене мирлĕ майпа татса пама май пулнине Корейăра перемири туни ĕненмелле кăтартса парать.

Халăх массисен мирпе демократишĕн, вăрçă вăйĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвне политика тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ шухăшлакан çынсене, арçынсене, хĕрарăмсемпе çамрăксене хутшăнтармалла, миршĕн тăракансен юхăмне сарма пулăшмалла.

Ĕçсыннисен пĕтĕм тĕнчери çыхăнăвĕсене вăйлатса тата сарса пыни кирлĕ, вăрçă чĕртекенсен чее ĕçĕсем тĕлĕшпе сыхăлăха ÿстермелле.

Конгресс мĕнпур ĕçсыннисене тата Европăри çĕршывсенчи мĕнпур профсоюзсене хăйсен вăйĕсене Бонра тата Парижра тунă килĕшÿсене çирĕплетме чăрмантарас шутпа пĕрлештерме чĕнет. Бонра тата Парижра тунă килĕшÿсен тĕллевĕ—Хĕвеланăç Германие милитаризацилесси. Вăл договорсем вăрçă хăрушлăхне татах ÿстереççĕ.

Конгресс рабочи класа нимĕç ĕçсыннийĕсен Германие тепĕр хут хĕçпăшаллантарассине хирĕç пыракан кĕрешĕвĕнче вĕсене пулăшу пама тата вĕсемпе пĕр шухăш-кăмăллă пулма, вăрçă чĕртекенсен ирсĕр ĕçĕсене путлантарса лартма чĕнсе калать. Çĕнĕрен çĕкленекен фашизм мир ĕçĕшĕн пысăк хăрушлăх пулнине шута илсе, çав хăрушлăха сирсе ярас тесе, конгресс ĕçсыннисене хăйсен сыхăлăхне ÿстерме чĕнет.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕн решенийĕсем мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисене çĕнĕ çĕнтерÿсем патне хăюллăн та шанчăклăн пыма май параççĕ. Мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисем хăйсен никам çĕнтерейми хĕçпăшалĕпе—пĕтĕм тĕнчери рабочисен туслăхĕпе—вăйлă.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕн манифесчĕ

Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисене

Рабочисемпе работницăсем, мĕнпур çĕршывсенчи вăй-хал ĕçĕпе тата ăс-тăн ĕçĕпе пурăнакан ĕçсыннисем!

Хаклă юлташсемпе туссем!

Эпир Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресне 79 çĕршывран килтĕмĕр. Эпир мĕнпур расăсемпе мĕнпур национальноçсен ĕçсыннийĕсен, политика тĕлĕшпе тĕрлĕ шухăшлă тата тĕрлĕ тĕн тытакан, организациленнĕ, вăй-хал ĕçĕпе, ăс-тăн ĕçĕпе пурăнакан 88.600 пин ĕçсынни ячĕпе килтĕмĕр. Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери çакăн пек аслă тĕлпулăвĕнче, рабочи юхăмĕн историйĕнчи чи паллă тĕлпулура, эпир хамăрăн требованисене тата хамăрăн кĕрешÿ çинчен, хамăрăн плансемпе шанăçсем çинчен сÿтсе яврăмăр. Демократилле майпа эпир пурте пĕрле кĕрешĕвĕн программине хатĕрлесе йышăнтăмăр. Вăл программа ырă пурнăçпа миршĕн тăракан мĕнпур ĕçсыннисен шухăш-ĕмĕчĕсене палăртса тăрать.

Шултра капиталăн пусмăрĕ айĕнчи çĕршывсенче ĕçсынни массисем темех чухăнлăхра пурăнасшăн мар, вĕсем шанăçсăрлăх, ĕçсĕрлĕх, чуралăх, вăрçă хăрушлăхĕ пирки асап курасшăн мар. Вĕсем пурăнма кирлĕ чи лайăх условисемшĕн, хăйсен прависене хÿтĕлессишĕн, çирĕп мире сыхласа хăварассишĕн пĕрлешеççĕ. Францири тата Италири миллионшар ĕçсыннисем пĕрлĕхлĕ пулса забастовкăсем ирттерчĕç. Забастовкăсем мĕн вăхăта пынине тата унта хутшăннă çынсен хисепне илес пулсан, ун пек пысăк забастовкăсем халиччен пулман. Хальхи вăхăтра Англири миллионшар ĕçсыннисем ĕç укçи ÿстерме требовани лартаççĕ. Пысăк та массăлла забастовкăсем çавăн пекех Индире, Бразилире тата Иранра пулса иртнĕ. Африка территорийĕн пысăк пайĕнче пулнă забастовкăра ĕçсыннисем колонизаторсене ĕç кодексне йышăнтарма пултарчĕç. Урăх расăллă çынсене, тан мар тесе шутласа, пусмăрласа хĕсĕрленине хирĕç Африкăра пĕтĕм кĕрешÿ сарăлса пырать.

Капитализмла тата колонилле мĕнпур çĕршывсенче — Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Японире, Греципе Испанире, Индонезипе Марокăра, Вăтам Хĕвелтухăçĕпе Латинла Америкăра çĕршывсенче рабочи юхăмĕ сарăлса пырать. Колонилле тата пăхăнса тăракан çĕршывсенче наци тĕлĕшĕнчен ирĕке тухассишĕн кĕрешÿ вăйланать. Темиçе çĕр çул хушши колонизаторсен пусмăрĕ айĕнче пурăннă ватă Ази майĕпен пусмăртан хăтăлса пырать. Çĕнĕ аслă держава—Китай Халăх Республики çуралчĕ. Китай Халăх Республики мире юратакан ытти вăйсемпе пĕрле мирĕн аслă ĕçне, пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăха тата нацин никама пăхăнманлăхне хÿтĕлет. Вьетнампа Японири, Малайăпа Индонезири, Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи, Африкăри тата Латинла Америкăри халăхсем хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн кĕрешеççĕ.

Мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисем — арçынсемпе хĕрарăмсем!

Простой çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатасси, пĕтĕм тĕнчери мире çирĕплетесси, эсир тунă çитĕнÿсене темиçе хут ÿстересси сирĕнтен, сирĕн пĕрлĕхрен, сирĕн кĕрешÿрен килет. Халăхсем миршĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешни малтанхи çитĕнÿсене тума май панĕ ĕнтĕ. Корейăри юнлă вăрçă чарăнчĕ.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ тĕнчери мĕнпур тавлашуллă ыйтусене мирлĕ майпа татса пама чĕннине çĕршер миллион арçынсемпе хĕрарăмсем кăмăлласа йышăнаççĕ.

Анчах çĕр çинче тĕнчери çивĕч лару-тăрăва çăмăллатассине хирĕç тăракан вăйсем те пур-ха. Вĕсене мир интереслентермест. Мĕнле те пулин нумайрах услам илес тесе, вĕсем тĕнчери лару-тăрури йывăрлăха татах ÿстерессишĕн, вăрçăшăн тăраççĕ. Вĕсем Хĕвеланăç Германие тепĕр хут хĕçпăшаллантараççĕ, унтан Европăри агрессин тĕп вырăнĕ туса пыраççĕ. Вĕсем Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса пама чарасшăн, вĕсем Япони çарне тепĕр хут тăваççĕ. Япони Инçет Хĕвелтухăçĕнчи тĕп çар бази пулса пырать. Вĕсем рабочи класăн пурнăçне начарлатса пыраççĕ. Вĕсем хĕçпăшалланассине хăвăртлатаççĕ. Васкаса хĕçпăшалланнă пирки ĕçсынни массисен пысăк йывăрлăх тÿсме тивет.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ çакна кăтартса панĕ: эпир, ĕçсыннисем—арçынсемпе хĕрарăмсем пурте, мĕнпур профсоюзсем, çакăншăн пĕрлешме пултаратпăр:

ĕç укçи ÿстерессишĕн, налогсене чакарассишĕн, ĕçсĕрлĕхе пĕтерессишĕн;

рабочи арçын е хĕрарăм пулнине, миçе çултине, раса тата наци тĕлĕшĕнчен кам пулнине пăхмасăр, пĕр тан ĕçшĕн пĕр тан ĕç укçи тÿлемелли йĕрке тăвассишĕн;

ĕçре çыннăн питех те йывăр хăвăртлăха пĕтерессишĕн;

социальнăй страхованипе обеспеченин анлă системине аталантарассишĕн;

рабочисене хирĕç пыракан законсене пăрахăçа кăларассишĕн тата профсоюзсене правасем парассишĕн;

вăрçă бюджетне чакарассишĕн тата çар валли уйăрма палăртнă укçа-тенкĕпе мирлĕ тĕллевпе экономикăпа культурăна аталантарас ĕçре усă курассишĕн;

çакăншăн: Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ, хăйĕн Уставне пурнăçласа пырса, халăхсем хушшинче мирлĕ майпа килĕштерсе ĕçлес тĕллевпе, хăй умне лартнă задачăсене пурнăçласа пыма тытăнтăр. Пĕрлĕх идеи массăсем хушшинче ытларах та ытларах сарăлать. Пĕр çĕршывра е пĕтĕм тĕнчипех ĕçсыннисем предприятисенче профсоюз пĕрлĕхне тăвассишĕн кĕрешесси вăйланса пырать.

Пĕтĕм тĕнчере профсоюзсен пĕрлĕхне тепĕр хут туса хуни питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл тĕнчери çивĕч лару-тăрăва çĕнĕрен вăйсăрлатма пулăшĕ, васкаса хĕçпăшалланассине чарĕ. Профсоюзсен пĕрлĕхĕ тĕрлĕ социальнăй системăлла государствăсем хушшинчи экономикăлла тата культурăлла туслă çыхăнусене аталантарма лайăх майсем туса парĕ. Профсоюзсен пĕрлĕхĕ мирлĕ строительствăна ÿстерме, ĕçсĕрлĕхе чакарма, халăхсен пурнăçне лайăхлатма пулăшĕ.

Мĕнпур çĕршывсенчи тата мĕнпур профессиллĕ ĕçсыннисем — арçынсемпе хĕрарăмсем!

Иккĕмĕш тĕнче вăрçин юнлă урокĕсене манар мар!

Хамăрăн ретсен пĕрлĕхне çирĕплетер!

Рабочи класăн çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕхне тепĕр хут тăвар!

Ку пĕрлĕхе предприятисемпе учрежденисенче тăвар, рабочисен требованийĕсене хÿтĕлес тĕлĕшпе пĕрлĕхлĕ фронт тăвар!

Америкăри Ĕçлев федерацийĕпе США-ри Производствăлла профсоюзсен конгресĕн руководителĕсем евĕрлĕ ĕçлесе çак пĕрлĕхе чăрмантарма хăтланакан раскольниксен политикине тăрă шыв çине кăларăр! Сакăн пек требовани лартăр: Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ ĕçсене пĕрле тумалли çинчен панă сĕнĕве кашни профсоюз организацийĕ тата Пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕ профсоюзсен конфедерацийĕн ертсе пыракан органĕсем йышăнччăр.

Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен никам аркатайми пĕрлĕхĕ сывă пултăр!

Çирĕп миршĕн, халăхсем хушшинчи туслăхшăн, этемлĕхĕн çутă малашлăхĕшĕн активлă та вĕçĕмсĕр кĕрешекен Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ сывă пултăр!

Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх çирĕпленни

ВАРШАВА, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Республикинче Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăха çирĕплетмелли уйăхлăх ăнăçлăн иртет. Предприятисенче, çĕнĕ стройкăсенче, транспортра, ялсенче совет халăхĕ ĕçре тунă çитĕнÿсем çинчен лекцисемпе докладсем, каласусем ирттереççĕ. Художествăлла пултарулăх коллективĕсем совет композиторĕсен музыкинчен йĕркеленĕ концертсем параççĕ.

Нумай ĕçсыннисем Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин ретне кĕреççĕ. Уйăхлăх пуçланнăранпа Варшавăра 100 пин çын ытла Общество членне кĕнĕ. Обществăн Сталиногруд воеводствинчи организацийĕ 40 пин çын таран ÿснĕ. Зеленогруд воеводствинче Обществăна 5 пин хресчен ытла кĕнĕ.

Çĕршыври хуласемпе ялсенче совет кинофильмĕсен фестивалĕ пысăк ăнăçлăхпа иртет. Фестивалĕн 10 кунĕ хушшинче столицăри кинотеатрсенче совет фильмĕсене 407 пин çын ытла пырса курнă. Варшава воеводствинче совет фильмĕсене 9 хулари тата 22 ялти стационарлă кинотеатрсенче кăтартаççĕ. Кунсăр пуçне ялсенче 19 кинопередвижка янă.

Варшавăна Мускаври Евг. Вахтангов ячĕпе тăракан театр пырса çитнĕ

ВАРШАВА, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăха çирĕплетмелли уйăхлăха хутшăнма ĕнер Варшавăна Мускаври Евг. Вахтангов ячĕпе тăракан театр коллективĕ пырса çитнĕ.

Театр Польшăри ĕçсыннисене «Егор Булычев и другие», «Седая девушка», «Много шума из ничего», «Кандидат партии» тата ытти спектакльсене те кăтартать.

Театр Польша столицинче тата çĕршывăн ытти хулисенче те пулать.

СОВЕТ СОЮЗĔН ÇАР КАРАПĔСЕМ БОЛГАРИРЕН ТУХСА КАЙНĂ

СОФИЯ, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн В. А. Пархоменко вице-адмирал ертсе пыракан çар карапĕсен отрячĕ паян Болгарири Сталин портĕнчен тухса кайнă. Карапсем кунта Совет Союзĕпе Болгари хушшинчи туслăх ячĕпе килнĕ пулнă.

Болгарипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕн итогĕсем

СОФИЯ, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществисен Союзĕн София хулинчи совечĕ Болгарипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕн итогĕсене пăхса тухнă. Совет халăхĕ миршĕн кĕрешни çинчен тата ССР Союзĕнчи коммунизм строительствин çитĕнĕвĕсем çинчен уйăх вăхăтĕнче София хулинче 578 пуху ирттернĕ. Совет Союзĕнче пулнă тĕрлĕрен делегаци членĕсем нумай пухусенче Совет Союзĕнче хăйсем мĕн курни çинчен каласа панă.

Совет наукипе техникин аталанни тата унăн çитĕнĕвĕсем çинчен аслă тата вăтам шкулсенче лекцисемпе каласусем ирттернĕ.

Уйăхлăх вăхăтĕнче София хулинче Болгарипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществисен Союзĕн организацийĕсем çĕнĕрен 18 тунă. Вăл организацисенче 2.500 çын ытла шутланать.

Синьган портĕнче

ПЕКИН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Синьган портне уçăранпа пĕр çул çитнĕ. Вăл порта Тяньцзиньрен инçех мар Бохайски заливĕнче тунă. Порта Япони оккупацийĕ вăхăтĕнчех тума пуçланă пулнă. Ун урлă тĕпрен илсен, Китай çĕр кăмрăкне Японие турттарса тăма шутланă. Япони захватчикĕсене çапса аркатнă хыççăн гоминдан влаçĕсем порт строительствине малалла тăсасси çинчен пĕлтернĕ, анчах вĕсем порта тума тытăнман. Вăл кăна мар, каялла чакнă чухне гоминдановецсем порта нумай аркатнă, нумай оборудованине хăйсемпе пĕрле турттарса кайнă. Центральнăй халăх правительствин решенийĕ тăрăх 1951 çулта порт строительстви çĕнĕрен пуçланнă. Порта срокчен, 1952 çулхи октябрьте туса пĕтернĕ.

«Гунженьжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, порт сăн-сăпачĕ нумай улшăннă. Малтанлăха грузсене тиес тата пушатас ĕçсене механизацилемен пулнă. Халĕ портра 17 хăватлă кран вырнаçтарса лартнă, вĕсем грузсене тавар турттаракан поездсем патне илсе пыраççĕ. Поездсем порт патне 6 чугун çул линийĕ тăрăх пырса тăраççĕ.

Портри грузсен çаврăнăшĕ уйăхран-уйăха ÿсет. Малтанхи вăхăтра портра пĕр талăкра 725 тонна груз тиенĕ тата пушатнă, кăçалхи сентябрь уйăхĕнче талăкри груз çаврăнăшĕ 1.795 тонна пулнă.

Американецсем перемири çинчен тунă килĕшĕве пăсма чарăнмаççĕ

ПЕКИН, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ октябрĕн 21-мĕшĕнче Кэсонран çапла пĕлтернĕ:

Перемири енĕпе ĕçлекен çар комиссийĕн секретарĕсен паянхи ларăвĕнче Корейăпа Китай енĕн представителĕ Жу Йон полковник Америка енĕн членĕсене Америка авиацийĕ чикĕсене 5 хутчен пăсни çинчен каланă.

Перемири çинчен тунă килĕшÿ çине алă пуснăранпа Америка енĕ демилитаризациленĕ зонăн чиккисене çĕр çинче тата сывлăшра 96 хутчен пăснă.

ФРАНЦИ ИНДО-КИТАЯ ÇĔНĔРЕН ÇАР ЧАÇĔСЕМ ЯРАТЬ

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Ханойран пĕлтернĕ тăрăх, паян Хайфона пиллĕкмĕш мароккански пехота полкĕ пырса çитнĕ, вăл халиччен Германире тăнă пулнă. Çитес вăхăтра ытти полксем пырса çитмелле.

Темиçе эрнерен кунта Корейăран Франци батальонĕ пырса çитет.

Англири забастовкăсем

ЛОНДОН. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра бензин автоцистернисем çинче ĕçлекен шоферсем 6 пин çын забастовка тăваççĕ. Забастовка тăвакансем ĕнер правительствăпа профсоюзсем ĕçлеме пуçлама чĕнсе каланине йышăнман. Вĕсем ĕç укçи ÿстерме требовани лартаççĕ.

Забастовкăна пула Лондонри 5.600 машинăран тăракан таксомоторнăй паркри машинăсенчен çурри ытла ĕçлемесĕр ларать.

ЛОНДОН. Лондонри бензин автоцистернисен 6 пин водителĕ, ĕç укçи ÿстерме ыйтса, тăваттăмĕш кун ĕнтĕ забастовка тăваççĕ. Рейтер агентствин пĕлтерĕвĕсенчен çакă курăнать: забастовкăна пула хулари пĕтĕм транспорт тенĕ пекех ĕçлемест. Ĕç министрĕ Монктон çапла пĕлтернĕ: забастовка тăвакан водительсем вырăнне лартма правительство çарсемпе усă курма шутлать.

ЛОНДОН. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англири ултă аэропортри механиксем ĕç укçине 15 процент чухлĕ ÿстерме ыйтаççĕ. Вĕсем хăйсем лартнă требование пурнăçличчен «вăраххăн ĕçлемелли» тактика тытса пыма йышăннă.

Октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС).

Канадăри забастовкăсем

ОТТАВА, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Глоб энд Мейл» хаçат çапла пĕлтерет: Онтарио провинцийĕнчи целлюлозăпа хут промышленноçĕнчи 10 пин ытла рабочи, ĕç укçи ÿстерме требовани лартса, забастовка пуçланă.

«Газетт» хаçат çапла çырать: Квебек провинцийĕн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнчи Норанда районĕнче ирттернĕ забастовкăна пула, ку районта ĕçленĕ юлашки рудник—«Уэйт амулет» хупăннă. Çак районта забастовка тăвакансен йышĕ 3 пин çынна çитнĕ. Канадиен Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Порт-Артур районĕнче 700 платник забастовка тума тытăннă.

ИТАЛИРЕ ШЫВ ТУЛНИ

РИМ, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 21-мĕшĕпе 22-мĕшĕсенче Калабрия облаçĕнче çумăр питĕ хытă çунă. Çавна пула çырансем ишĕле-ишĕле аннă, чылай вырăнсене шыв илнĕ. «Мессаджеро» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, шыв тулнă вăхăтра 48 çын вилнĕ, 200 çынна яхăн пĕр хыпарсăр çухалнă. Нумай çĕрте юханшывсем пĕвесене татнă, территорин чылай пайне шыв илнĕ. Шыв нумай çуртсене ишĕлтернĕ. Халăх пурăнакан нумай ялсем шыв варринче тăрса юлнă, унта пурăнакансем сăртсем çине вырнаçнă, халĕ те шыв унта çитеймен-ха.

Швейцари. Тĕнчери шахмат турнирĕнче.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: турнирта мала тухнă, тĕнче чемпионĕпе М Ботвинникпа ăмăртса выляма право илнĕ гроссмейстер В. Смыслов.

(ТАСС фотохроники).

Тĕнчери шахмат турнирĕнче

ЦЮРИХ, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). М. Ботвинникпа ирттерекен матча хутшăнма тивĕçлĕ пулассишĕн пыракан шахмат турнирĕн чи юлашки вăйăра 5 сехет хушши вылянă хыççăн Петросянпа Смыслов, Глигоричпа Бронштейн, Найдорфпа Керес, Таймановпа Решевский тата Авербахпа Геллер хушшинчи партисем пĕр-пĕрне çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Болеславскипе Эйве партие выляса пĕтереймен, тепĕр вăхăта хăварнă. Сабопа Котов хушшинчи партире Сабо позици лайăхрах. Ку партисене октябрĕн 24-мĕшĕнче выляса пĕтереççĕ.

Халлĕхе турнирта малтанхи пилĕк вырăна кам йышăнни паллă пулнă. Смыслов (СССР) 18 очко илсе пĕрремĕш вырăн йышăннă. Иккĕмĕш, виççĕмĕш тата тăваттăмĕш вырăнсене Бронштейн (СССР), Керес (СССР) тата Решевский (США) пайланă. Вĕсен—16-шар очко. Петросян (СССР) 15 очко илнĕ, пиллĕкмĕш вырăн йышăннă.

Ялсенчи спортсменсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕ

Ереван хулинче (Армян ССР-ĕ) ялсенчи çăмăл атлетсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕ пырать. Физкультурниксемпе физкультурницăсем хăвăрт чупас, сикес, ывăтас енĕпе ăмăртаççĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ çак ăмăртăва лайăх хатĕрленсе пынă. Кунта малтанхи кунсенчех 11 тĕрлĕ спорт вăййи енĕпе çĕнĕ рекордсем тунă.

Пирĕн республикăри ялсенчи паллă спортсменсене—Бикчурина, Камалтдинова, Улангина (Чкаловски районĕ), Антоновăпа Боровковăна (Комсомольски районĕ), Юрьевăна (Вăрмар районĕ) РСФСР-ăн сборнăй командине кĕртнĕ. Çак команда малтанхи кунсенчех пĕрремĕш вырăнта пыма тытăннă. 800 метр хушшине 1 минут та 56,4 секундра чупса тухса, Бикчурин пĕрремĕш вырăн йышăннă. Вăл çак дистанцие иртнĕ çулхинчен 3,6 секунд хăвăртрах чупса тухнă.

Ялсенчи çăмăл атлетсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвне çавăн пекех пирĕн земляк, спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Игнатьева (РСФСР команди) хутшăннă. Вăл 200 метр хушшине чупас енĕпе мала тухнă.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Александр Степанович Малышев юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă май, Чăваш АССР Суту-илÿ министрĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—октябрĕн 25-мĕшĕпе 26-мĕшĕнче кăнтăрла тата каçхине вырăсла спектакль «Беспокойная должность».

Октябрĕн 27-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Вей, ветерок».

Кăнтăрлахи спектакльсем 12 сехетре, каçхине—19 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«УДАРНИК»—октябрĕн 25 мĕшĕнче кăнтăрлахи сеанссенче «Адмирал Ушаков» (1-мĕш сери), каçхи сеанссенче «Анна пролетарка».

Октябрĕн 26-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Корабли штурмуют бастионы» («Адмирал Ушаков», 2-мĕш сери).

Шупашкарти
тата республикăри
экрансем çинче
„Песни Родной стороны"
ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм
кăтартма пуçлаççĕ.
Сценари авторĕ тата фильма лартаканĕ—А. Фролов.
Ленин орденлĕ «Мосфильм» киностудийĕ 1953 çулта ÿкернĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары ул. Володарского 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09611 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2401. Тираж 20.000 экз.